Пӗр №-рӗ 10 пус 19-мӗш ҫул тухат̆ **Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!**

1937 НОЙАБӖР 2 ЫТЛАРИКУН 252 (4764)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ

Редакципе кантур адресӗ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ Октт̆аберти Социалисӑмла Аслӑ Революци 20 ҫул тултарнине уйавласа иртерме панӑ

ЛОЗУНГСЕМ

1. Сывӑ пултӑр ССР Союзӗнчи Октт̆аберти Социалисӑмла Аслӑ революци 20 ҫул тултарни!

2. ССР Союзӗнчи рабочисемпе хресченсем ҫирӗм ҫул хушши хӑватлӑ кӗрешсе хулари тата йалти ӗҫҫыннисен социалисӑмлӑ обшчӗствине туса хучӗҫ. Тӗнчери пӗрремӗш социалисӑмлӑ государствӑн вӑйне тата хӑватне тӗреклетер!

3. Фашисла террор, ҫуклӑх, безработицӑ — акӑ капиталисӑмла ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисен пурнӑҫ виҫи!
Експлоатацийе пӗтернӗ, ӗҫҫыннисем ирӗклӗ, пуйан пурӑнаҫҫӗ — акӑ пирӗн Октт̆аберти революцин итогӗ!

4. Кивӗ Роҫҫийӑ чухӑн тата вӑйсӑр пулнӑ. Совет Союзӗ ҫирӗм ҫул хушшинче хӑватлӑ тата халӑх тулӑх пурӑнаҫпа пурӑнакан социалисӑмлӑ ҫӗршыв пулса тӑчӗ. Сывӑ пултӑр пирӗн Октт̆аберти, ССР Союзӗнчи халӑхсене телей панӑ революци!

5. Совет влаҫӗн ҫирӗм ҫулӗ хушшинче рабочисемпе хресченсен союзӗ ҫирӗпленсе никам пӑсайми пулса тӑчӗ. Сывӑ пултӑр рабочисемпе хресченсен союзӗ—Совет влаҫӗн никӗсӗ!.

6. Патша Роҫҫийӗ халӑхсен тӗрми пулнӑ. Совет ҫӗршывӗнче пӗртан правалӑ халӑхсен аслӑ союзӗ ӳссе тата ҫирӗпленсе пырат̆. Сывӑ пултӑр ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванлӑ союзӗ тата аслӑ туслӑхӗ!

7. Рабочи класӑн диктатури ССР Союзӗнче социалисӑм тӑвассине пурнӑҫа кӗртрӗ. ССР Союзӗнчи рабочи класӑн диктатурине — рабочи клас хамӑрӑн пӗтӗм обшчӗствӑна государствӑлӑ йертсе пырассине ҫирӗплетер!

8. Социалисӑмла революцин ҫирӗм ҫулӗ хушшинче пирӗн тӑван ҫӗршыв хӑватлӑ индустрилӗ державӑ пулса тӑчӗ. Малала, коммунисӑмӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗсем патне!

9. Сталинла Конституци — Октт̆аберти Социалисӑмла Аслӑ революцин кӗрешӳпе ҫӗнтерӳсен итогӗ. Сывӑ пултӑр ҫӗнтерӳлӗ социалисӑмӑн тата чӑн-чӑн демократисӑмӑн Конституцийӗ!

10. „Пирӗн революци капиталисӑмӑн сӑнчӑрӗсене ҫӗмӗрсе, халӑха ирӗке кӑларнӑ кӑна мар, тата халӑха пуйан пурӑнма материаллӑ условисем пама ӗлкӗрнӗ пӗртен пӗр революци пулат̆. Ҫакӑнта пирӗн революцин вӑйӗпе никам ҫӗнейми хӑвачӗ“ (Сталин).

11. Пӗтӗм ҫӗршывсенчи пролетарисем! Колонисенчи пусмӑрта пурӑнакан халӑхсем! Ленин—Сталин йалавне, ҫӗнтерӳлӗ социалисӑмла революци йалавне ҫӳлерех ҫӗклӗр! Сывӑ пултӑр пӗтӗм тӗнчери пролетарилӗ революци!

12. Каслӑ тӑвансене, капитал тӗрмисенче асапланакансене, фашисӑмӑн йунлӑ террорӗн асапне тӳсекенсене, рабочи класӑн ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешекен борецсене — пирӗнтен пролетариле салам!

13. Испани халӑхӗ шалти тата йутҫӗршывсенчи фашисӑма хирӗҫ кӗрешнимӗн пур малта пыракан тата малала туртӑнакан етемлӗхӗн ӗҫӗ. Никама пӑхӑнмасӑр тата ирӗклӗ пурӑнассишӗн паттӑр кӗрешекен Испани халӑхне салам!

14. Никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассишӗн Йапони захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешекен аслӑ Китай халӑхне тӑванлӑ салам!

15. Фашиссем Совет Союзӗ ҫине тапӑнма хатӗрленеҫҫӗ. Тӗп пулчӗр вӑрҫӑ чӗртсе йаракан фашиссем! ССР Союзӗшӗн — пӗтӗм ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисемпе пусмӑрта пурӑнакансен тӑван ҫӗршывӗшӗн тӑрӑр!

16. „Епӗр миршӑн тӑратпӑр, епӗр мир ӗҫӗшӗн ӗҫлетпӗр. Анчах епӗр пире йунанинчен хӑрамастпӑр, вӑрҫӑ чӗртсе йаракансен тапӑнӑвӗ ҫине тапӑнупах ответ пама хатӗр тӑратпӑр“ (Сталин).

17. Сывӑ пултӑр пирӗн тӑван, никам ҫӗнтерейми Хӗрлӗ ҫар, ССР Союзӗнчи халӑхсен мирлӗ ӗҫӗн хӑватлӑ хӳтлӗхӗ, Октт̆аберти Социалисӑмла Аслӑ Революци ҫӗнтерсе илнисен шанчӑклӑ хуралҫи!

18. Сывӑ пулччӑр пӗтӗм тӗнчипе авиаци рекорчӗсене тунӑ совет љотчикӗсем — пирӗн тӑван ҫӗршывӑн мухтавлӑ соколӗсем!

19. Пограничник-боецсене, социалисӑмлӑ ҫӗршывӑн ҫивӗч куҫлӑ часовойӗне—салам!

20. Промышленнӑҫпа транспӑртри ударниксемпе ударницӑсен нумай мӗлйунлӑ ҫарне, стахановецсемпе стахановкӑсене, пирӗн ҫӗршывӑн йатлӑ ҫыннисене—большевикла салам!

21. Йӑвӑр идустрипе машиностройенири рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Кӑмрӑк, нефт̆, металл нумай кӑларассишӗн, ҫӗршыв халӑх хуҫалӑхӗн аталанӑвӗн никӗс пулса тӑракан чи лайӑх машинӑсене вӑхӑтра туса кӑларассишӗн!

22. Ҫӑмӑл промышленнӑҫри рабочисемпе работницӑсем, командирсем тата инженерсем! Совет гражданӗсене, ситцӑ, пурҫӑн, сукна, трикотаж, урана тӑхӑнмалисем ытларах парӑр! Продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн кӗрешӗр!

23. Социалисӑмла уйхир ӗҫӗнчи вӑйлӑ тырпулшӑн большевикла кӗрешекен стахановецсене салам! Сывӑ пултӑр колхозсен тата колхозниксен пуйан та культурӑлӑ пурнӑҫӗ!

24. ССР Союзне тӗнчипе чи малта пыракан промышленнӑҫлӑ тата техникӑлӑ, чи ҫӳлӗ тухӑҫлӑ йалхуҫалӑхлӗ ҫӗршыв туса хурар! Продуктӑсем ытлашшипех пулмала тӑвар!

25. ССР Союзӗнчи халӑхсен культури малала чечекленсе ӳссе пырассишӗн, совет наукипе техникин ҫӗнӗ ӑнаҫлӑхӗсемпе ҫӗнтерӗвӗсемшӗн!

26. Сывӑ пултӑр ССР Союзӗн пӗртан правалӑ, государствӑна тытса тӑрас ӗҫе тата ҫӗршывӑн хуҫалӑхпа культурӑ ӗҫӗсене активлӑ хутшӑнакан хӗрарӑмӗ!

27. Пионерсемпе пионеркӑсем! Совет шкулӗнче вӗренекенсем! Пӗлӳсене ҫӗнсе илӗр, Ленин ӗҫӗшӗн кӗрешекенсем пулма вӗренӗр!

28. Сывӑ пултӑр комсомол—большевикла партин хӑватлӑ резервӗ тата шанчӑклӑ помощникӗ! Сывӑ пулччӗр пирӗн тӑван ҫӗршыври ӗҫҫамрӑкӗсем!

29. „Массӑсемпе ҫыхӑнса тӑни, ҫав ҫыхӑнува ҫирӗплетсе пыни, массӑсен сассине итлеме хатӗр пулни—акӑ мӗнре большевикла йертсе пырассин вӑйӗпе ҫӗнтерейми хӑвачӗ“ (Сталин).

30. Революцилӗ сыхлӑха вӑйлатар! Хамӑр хушӑри политикӑлӑ тимсӗрлӗхе пӗтерер!

31. Халӑхӑн тӑшманӗсене—троцкисла-бухаринла шпионсене тата сӑтӑрҫӑсене, йутҫӗршывсенчи фашисла разведкӑсене тара кӗрешнӗскерсене тӗп тӑвар! Тӑван ҫӗршыва пӑрахса тӑшмана сутӑнакансене вилӗм!

32. Пур тӗрлӗ двурушниксене пурне те тӑрӑ шыв ҫине кӑларар! Пирӗн партийе большевисӑмӑн никам илейми крепӑҫӗ туса хурар!

33. Рабочисемпе хресченсем! Суйлав кампанине сарса пырӑр! ССР Союзӗн Аслӑ Советне чи лайӑх ҫынсене, Ленин — Сталин ӗҫӗшӗн вӗҫне ҫитиех тӑракансене пӗрле палӑртӑр!

34. ССР Союзӗнчи ӗҫҫыннисем! Аслӑ Совета тӑван ҫӗршывӑн паттӑр патриочӗсене, рабочисемпе хресченсен телейӗшӗн, социалисӑмшӑн нимӗн пӑрӑнми кӗрешекен борецсене суйлӑр!

35. Коммуниссем! Партире тӑман массӑсемпе ҫирӗпрех ҫыхӑнӑр! Суйлав кампанинче чи кирли — партире тӑман массӑсенчен уйӑрӑлмасӑр, партире тӑманнисемпе пӗрле ӗҫлемеле, вӗсемпе пӗрле ССР Союзӗн Аслӑ Советне кандидатсем палӑртмала.

36. Сывӑ пултӑр Пӗтӗм Союзри большевиксен коммунисла партийӗ—ССР Союзӗнчи ӗҫҫыннисен малти отрйачӗ!

37. Сывӑ пултӑр Коммунисла Интернационал — вӑрҫа, фашисӑма тата капиталисӑма хирӗҫ кӗрешӗвӗн организатӑрӗ! Сывӑ пултӑр пӗтӗм тӗнчипе пулас коммунисӑм!

38. Сывӑ пултӑр Марксӑн — Енгелсӑн — Ленинӑн никам ҫӗнейми аслӑ йалавӗ! Сывӑ пултӑр ленинисӑм!

ПӖТӖМ СОЙУЗРИ КОММУНИССЕН (большевиксен) ПАРТИН ТӖП КОМИТЕЧӖ.

Металлургипе кӑмрӑк промышлӗннӑҫӗнчи йертсе пыракан работниксене тата стахановецсене партипе правителствӑ руководителӗсем Кремљре 1937 ҫулхи октт̆аберӗн 29-мӗшӗнче йышӑнни

Октт̆аберӗн 29-мӗшӗнче, каҫхипе, Партипе Правителствӑ руководителӗсем, Кремљре, Йӑвӑр промышлӗннӑҫ халӑх комиссариатӗнче пулса иртнӗ канашлусенче пулнисене, металлурги тата кӑмрӑк промышлӗннӑҫ работникӗсене йышӑннӑ.

Йышӑнура тӑватӑ ҫӗр ҫын пулнӑ—металлурги, кокҫохими, тимӗр руди тата вут-кӑвара парӑнман йапаласем тӑвакан предприйатисен директӑрӗсем, инженерсем, цех начальникӗсем, мастерсем тата рабочи-стахановецсем, шахтӑр-стахановецсем, кӑмрӑк трест управљайушчийӗсем, шахтӑ заведуйушчийӗсем тата Йӑвӑр промышлӗннӑҫ халӑх комиссариачӗн йертсе пыракан работникӗсем.

Металлургсем тата кӑмрӑк кӑларакансем Грановитайа палатӑна пухӑннӑ. Вӗсем патне 7 сехет те 30 минутра, каҫхине, **Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Микойан, Йежов, Чубарь, Хрушчов, Булганин, Межлаук, Шкирйатов** йулташсем пынӑ. Вӗсене хӗрӳлӗн саламласа кӗтсе илнӗ.

Йӑвӑр промышлӗннӑҫ Халӑх Комиссарӗ Л. М. Каганович йулташ, калаҫува уҫат̆ те калат̆:

„Йулташсем! Пирӗн канашлусен ӗҫӗсем пӗтнӗ хыҫҫӑн металлургсем тата кӑмрӑк кӑларакансем партипе правителствӑ руководителӗсемпе тӳслӑ тӗлпулма тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Металлурги, кӑмрӑк, коксохими, вут-кӑвара парӑнман йапаласем тӑвакан тата тимӗр руди промышлӗннӑҫӑн работникӗсене пысӑк хисеп тунӑ, ҫав хисепе вӗсем, епӗ шансах тӑратӑп, ӗҫпе тӳрре кӑларӗҫ.

Йулташсем, правителствӑ членӗсем! Металлургсем тата кӑмрӑк кӑларакансем халӗ вӑхӑтлӑх йӑвӑрлӑхсенчен тухма тӑрӑшаҫҫӗ. Пирӗн канашлусенче епӗр хамӑрӑн ҫитменлӗхсене большевикла, сталинла уҫса палӑртрӑмӑр, кӗске вӑхӑтрах ҫӗнӗ ҫӗкленӳ тума, ҫав ҫитменлӗхсене ҫӗнтермели ҫулйӗрсене палӑртса хутӑмӑр. Ҫав ҫӗнӗ ҫӗкленӳве епӗр тӑватпӑрах, мӗншӗн тесен стахановецсен речӗсем ӳссех пыраҫҫӗ.

Пӗррӗмӗш тоста металлурги промышлӗннӑҫӗнчи пирӗн мухтавлӑ рабочисен, стахановецсен тата руководителсен йачӗпе калар. Сирӗн сывлӑхушӑн, йулташсем!

Кӑмрӑк,—тет малала **Каганович** йулташ,—вӑл халӑх хуҫалӑхӗн пур отраҫлисене те кирлӗ, апат-ҫимӗҫ пулса тӑрат̆. Унсӑрӑн енерги пулмаст̆, ӗҫлекен заводсем, транспӑрт пулмаҫҫӗ, ҫавӑнпа кӑмрӑк промышлӗннӑҫӗ халӑх хуҫалӑхӗнче ӗҫе татса паракан вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Кӑмрӑк промышлӗннӑҫӗнчи работниксем халӗ кӑмрӑк промышлӗннӑҫне ҫӗнӗ ҫӗкленӳ патне илсе кайма пӗтӗм вӑйа хурса ӗҫлеҫҫӗ. Нумай пулмаст̆ Донбассра шахтӑр-стахановецсен тата ударниксен сљочӗсем пулса иртрӗҫ. Ҫав сљотсенче 14 пин ҫурӑ чаплӑ ҫынсем—нормӑсене 200 тата 300 процент тултарнӑ ӗҫ геройӗсем пулчӗҫ. Вӗсем: Донбасс шахтӑрӗсем кӑмрӑк кӑларассине ӳстерӗҫ, Донбассӑн кӑмрӑк промышлӗннӑҫне ҫӗклентерӗҫ, тесе тупа турӗҫ тата ун ҫинчен Сталин йулташа каласа пама ыйтрӗҫ. Мускав патӗнчи бассейнри, Кузнецкри, Карагандари тата ытти бассейнсенчи кӑмрӑк кӑларакансем те ҫавӑн пекех тума сӑмах параҫҫӗ.

Мухтавлӑ шахтӑрсен, стахановецсен, кӑмрӑк промышлӗннӑҫӗнчи малта пыракан командирсен йачӗпе, вӗсен сывлӑхӗшӗн тата малала чечекленсе пырассишӗн тост калар!“

Каганович йулташ йулашки сӑмахсене каланӑ чухне тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ. Пӗтӗм зал нумайччен металлургсене, мухтавлӑ Донбасӑн тата Мускав ҫывӑхӗнчи бассейнӑн представителӗсене саламлат̆.

Унтан **Каганович** йулташ халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ, йуратнӑ тӑван **Сталин** йулташ йачӗпе тост калат̆.

„Йулташсем! Пӗтӗм халӑхпа, стахановецсен мухтавлӑ йачӗсемпе **Сталин** йулташӑн аслӑ та тӑван тата йуратнӑ йачӗ тачӑ ҫыхӑнса тӑрат̆. **Сталин** йулташӑн сывлӑхӗшӗн!“ **(Тӑвӑллӑн алӑ ҫупса саламлаҫҫӗ. Йышӑнува пынисем пурте ура ҫине тӑрса, нумайччен алӑ ҫупса тата „урра“ кӑшкӑрса халӑхсен аслӑ ҫулпуҫне Сталин йулташа саламлаҫҫӗ. „Сывӑ пултӑр йуратнӑ Сталин“).**

Каганович йулташ, пӗтӗм йӑвӑр промышлӗннӑҫӑн ҫӗнӗ ҫӗкленӳ тумали ҫине кӑтартса парса, йӑвӑр промышлӗннӑҫӑн ытти пур отраҫлисенчи рабочисен, стахановецсен тата руководителсен: нефтаниксен, химиксен, строителсен, електростанцисен, пӑхӑр рудникӗсен, тӑслӗ тата сайра пулакан металл завочӗсенчи работниксен, ылтӑн прииксисенчи работниксен, геологсен, торфйаниксен, Йӑвӑр промышлӗннӑҫ халӑх комиссариатӗнчи работниксен йачӗпе тост калат̆. **Каганович** йулташ нумай пулмаст Йӑвӑр промышлӗннӑҫ халӑх комиссариатӗнчен уйӑрӑлса тухнӑ рабочисемпе руководителсен—машиностройенипе оборонӑ промышлӗннӑҫӗнчи работниксен йачӗпе тост калат̆. **(Алӑ ҫупаҫҫӗ).**

Каганович йулташ ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателне Вйачеслав Михайлович **Молотова** сывлӑх сунса, ватӑ металлиста—ССР Союзӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет председателне Михаил Иванович **Калинина** сывлӑх сунса, Совет Союзӗн маршалне Оборонӑ Халӑх Комиссарне Климентий Иефремович **Ворошилова** сывлӑх сунса, пирӗн Апат-ҫимӗҫ промышлӗннӑҫӗн организатӑрӗпе халӑх комиссарне Анастас Иванович **Микойан** йулташа сывлӑх сунса, ССР Союзӗн Шалти ӗҫсен мухтавлӑ халӑх комиссарне Николай Иванович **Йежов** йулташа сывлӑх сунса, ПСК(б)П Тӗп Комитечӗн секретарне **А. А. Андрейев** йулташа сывлӑх сунса; ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑнакан Хӗрлӗ Мускав йачӗпе, москвичсен тата Мускав большевикӗсен руководителне **Н. С. Хрушчова** сывлӑх сунса, ССР Союз правителствин тата РСФСР правителствин членӗсен йачӗпе тост калат̆. **(Оваци тата „урра“ кӑшкӑраҫҫӗ).**

Молотов йулташ, хӑйӗн кӗске сӑмахӗнче, стахановецсен—металлургсен тата кӑмрӑк кӑларакансен йачӗпе, Йӑвӑр промышлӗннӑҫ Халӑх Комиссарӗ Лазарь Моисейевич **Каганович** йачӗпе тост калат̆.

„Пирӗн ҫӗршыври промышлӗннӑҫӑн чи паха отраҫлисенчен пӗрин,—хура металлурги работникӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Сирӗн,—тет **Молотов** йулташ,—тумасӑр йулнине туса ҫитерме пит нумай ӗҫлемеле пулат̆“.

Сталин.—„Ҫӗкленӳ умӗн хӑшпӗр йӑвӑрлӑхсем урлӑ каҫмала“.

Молотов.—„Сталин йулташ ҫӗкленӳ умӗн йӑвӑрлӑхсене ҫӗнтерме кирли ҫинчен калат̆. Епӗр шансах тӑратпӑр, металлургсем ҫав йӑвӑрлӑхсене ҫӗнтерӗҫ тата хӑйсене тивӗҫлӗ вырӑна йышӑнӗҫ. Кӑмрӑк промышлӗннӑҫӗнчи работниксем те ҫавӑн пек вырӑнах йышӑнӗҫ.

— Сире,—тет **Молотов** йулташ,—хура металлургире, кӑмрӑк промышлӗннӑҫӗнче, йӑвӑр промышлӗннӑҫӑн ытти отраҫлисенче те, Лазарь Моисейевич **Каганович** йертсе пынипе чукунҫул ҫинче ӗҫлекенсем тунӑ пек ҫитӗнӳсем тума ыррӑ сунатӑп“. **(Оваци, „урра“ кӑшкӑраҫҫӗ).**

Ворошилов йулташ хӑйӗн сӑмахӗнче металлургсемпе кӑмрӑк кӑларакансене, йӑвӑр промышлӗннӑҫӑн работникӗсене Хӗрлӗ ҫара тӑшмансем хӑраса тӑмалӑх хӗҫпӑшалланма, ҫав тери вӑйлӑ пулса тӑма май панӑшӑн пӗтӗм чӗререн красноармейецла тавтӑват̆. „Анчах епӗ тавтунинче,—тет **Ворошилов** йулташ,—требовани те пур—хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн оборони вальђи тата лайӑхрах ӗҫлемеле, кӑмрӑк тата металл ытларах памала, а пире хӗҫпӑшаллантаракансен тата лайӑхрах машинсем памала. **(Оваци: Сасӑсем:** „Урра Хӗрлӗ ҫара тата унӑн руководителне Ворошилов йулташа“).

Сӑмах Сталин йулташа параҫҫӗ. Йышӑнува пынисем пурте ура ҫине тӑрса **Сталин** йулташа тӑвӑллӑн алӑ ҫупса саламлаҫҫӗ. **„Урра“, „сывӑ пултӑр пирӗн йуратнӑ, тӑван Сталин йулташ“,** тесе кӑшкӑраҫҫӗ.

„Йулташсем,—тесе пуҫлат̆ хӑйӗн сӑмахне **Сталин** йулташ.—Манӑн тост кӑштах йевӗрлӗрех те йаланхи пек мар пулат̆. Пирте тостсене руководителсен, шефсен сывлӑхӗшӗн, ҫулпуҫсемшӗн, наркомсемшӗн калама хӑнӑхнӑ. Ку, паллах, йапӑх мар. Анчах пысӑк руководителсемсӗр пуҫне вӑтам тата кӗҫӗн руководителсем те пур. Вӗсем, ҫав руководителсем, кӗҫӗннисемпе вӑтаммисем, пирӗн вуншар пин пур. Вӗсем мӑнкӑмӑллӑ ҫынсем мар, вӗсем мала тӑрӑнмаҫҫӗ, вӗсем курӑнмаҫҫӗпе пӗрех. Анчах вӗсене асӑрхаманни суккӑрлӑх пулнӑ пулӗччӗ. Мӗншӗн тесен пирӗн мӗн пур халӑх хуҫалӑхӗнче производствӑн кун-ҫулӗ ҫав ҫынсенчен килет. Апла еппин пирӗн хуҫалӑх руководствин кун-ҫулӗ те вӗсенчен килет.

Пирӗн хуҫалӑхри вӑтам тата кӗҫӗн руководителсен сывлӑхӗшӗн! **(Оваци. „Урра“ кӑшкӑраҫҫӗ).**

Руководителсем ҫинчен пӗтӗмӗшлӗн ҫакна калас пулат̆: вӗсем, шел те ӗнтӗ, совет стройӗн условийӗсенче истори вӗсене мӗнле ҫӳлӗ вырӑна ҫӗклентернине пӳр чухнех те ӑнланмаҫҫӗ. Вӗсем пур чухнех те ҫакна ӑнланмаҫҫӗ: пирӗн условисенче хуҫалӑх руководителӗ пулассн,—вӑл ӗнтӗ—аслӑ чыспа аслӑ хисепе тивӗҫлӗ пулассине, рабочи класран, халӑхран аслӑ шанӑҫ илме тивӗҫ пулассине пӗлтерет. Ӗлӗкхи вӑхӑтра, капиталисӑм вӑхӑтӗнче, хуҫалӑх руководителӗсене, тӗрлӗ директӑрсене, управљайушчисене, цех начальникӗсене, мастерсене хуҫа капиталиссен сӑнчӑрти йыттисем тесе шутланӑ. Халӑх вӗсене курайман, тӑшман вырӑнне хунӑ, мӗншӗн тесен халӑх вӗсене, вӗсем хуҫалӑха хуҫасен интересӗсемшӗн, капиталиссен усламӗсемшӗн тытса пыраҫҫӗ, тесе шутланӑ. Пирӗн стройра, совет стройӗнче, йалтах урӑхла, хуҫалӑх руководителӗсен халӑх шанчӑкӗпе тата йуратӑвӗпе усӑ курма пур сӑлтавсем те пур, мӗншӗн тесен вӗсем хуҫалӑха капиталиссен нӗчӗк ушкӑнӗн усламӗсемшӗн мар, рабочи клас интересӗсемшӗн, пӗтӗм халӑх интересӗсемшӗн тытса тӑраҫҫӗ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ хуҫайственник йачӗ пирӗн условисенче хиселлӗ йат пулса тӑрат̆,—совет условийӗсенче руководител пулассн ӗнтӗ—халӑх куҫӗ умӗнче пысӑк чыспа шанчӑка тивӗҫлӗ пулассине пӗлтерет. Халӑх хуҫайственниксене шанни пысӑк ӗҫ, йулташсем. Руководителсем килеҫҫӗ те кайаҫҫӗ, халӑх йулат̆. Халӑх кӑна вилӗмсӗр. Ыттисем пурте улшӑнса пыраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та халӑх шанӑҫне пысӑка хума пӗлес пулат̆.

Пирӗн хуҫайственниксен, хӑйсен пысӑк рольне ӑнланса тӑна илнӗ тата совет хуҫалӑх руководителӗн хиселлӗ йатне ҫӗртме тата чакарма никама та ирӗк парас ҫук хуҫайственниксен, сывлӑхӗшӗн! **(Оваци, „Урра“ кӑшкӑраҫҫӗ).**

Йулташсем! Пирӗн хушӑмӑрта халӑх хуҫалӑхӗнчи ҫӗнӗ ӗҫӗн пионерӗсем, стахановла йухӑмӑн боецӗсем пур. Ҫав ҫӗнӗ ӗҫӗн пионерсемпе боецӗсен сывлӑхӗшӗн! Стаханов, Дӳканов, Изотов, Рябошапка тата ытти йулташсен сывлӑхӗшӗн! **(„Урра“ кӑшкӑраҫҫӗ).**

Йулашкинчен, металлургири домнӑ ӗҫӗн ҫӗнӗ тата ватӑ боецӗсен сывлӑхӗшӗн, тата чи малтан, доменшчик Коробов йулташ сывлӑхӗшӗн, ашшӗ-Коробовшӑн, унӑн ывӑлӗшӗн, Коробов доменшчиксен пӗтӗм ҫемйишӗн, Коробовсен ҫемйи ӗҫӗн ҫӗнӗ меточӗсенчен ан йултӑр тесе. **(Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ, „Урра“ кӑшкӑраҫҫӗ).**

Ашшӗ-Коробов, **Сталин** йулташ йенне ҫаврӑнса, ҫапла калат̆: „Сталин йулташ. Епӗ ӗнтӗ старик, анчах Есӗр сунса каланине пурнӑҫа кӗртес тата ытти металлургсенчен малта пулас тесе, хамӑн мӗн пур вӑйа хурӑп“.

Партипе правителствӑ руководителӗсем металлургсемпе тата кӑмрӑк кӑларакансемпе туслӑн тӗлпулса калаҫни сурҫӗр иртсен те чылайччен пынӑ. Йышӑнува пынисем вальђи Хӗрлӗ ҫар йуррисемпе ташшисен хӗрлӗйалавлӑ ансамблӗ концерт панӑ. ССР Союзӗн халӑх артисӗ орденоносец профессор Александров йертсе пынӑ концерт пысӑк ӑнаҫулӑхпа иртнӗ.

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн командирӗсене, политработникӗсене, инженерсемпе техникӗсене орденсемпе наградӑланӑ

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн пӗрлешӳвӗсене, чаҫӗсемпе подразделенийӗсене ҫар ӗҫне, политикӑна тата техникӑна вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе калама ҫук чаплӑ ҫитӗнӳсем тунӑшӑн, ССР Союзӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ 81 командира, политработника, инженера тата техника орденсемпе наградӑлама йышӑннӑ.

Йушкевич В. А. комдива, Семашко Е. В. капитана, Полушко Ф. И. капитана, Йелкин И. В. лейтенанта, Желтӑков И. В. лейтенанта Ленин орденӗпе наградӑланӑ.

Хӗрлӗ Йалав орденӗпе 55 ҫынна, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе 18 ҫынна, Знак Почета орденӗпе 3 ҫынна наградӑланӑ.

(ТАСС).

Горњакла сӑмах

СТАЛИНО, октт̆аберӗн 31-мӗш (ТАСС). 30 № шахтӑри горњаксем ӗҫе пуҫлаччен нумай халӑхлӑ митингра партипе правителствӑ руководителӗсем Кремлре металлургипе ҫӗркӑмрӑк промышленнӑҫ работникӗсене йышӑннине пӗлнӗ.

Горњаксем хӑйсем тухса каланӑ сӑмахӗсенче стахановецсен тусӗ, учителӗ, халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ ҫинчен чикӗсӗр йуратса каланӑ.

— Ана, тӑван Сталина, — тенӗ крепильщик Ларин йулташ,—пирӗншӗн, стахановецсемшӗн тӑрӑшни ҫине тивӗҫлипе ответлеме горњакла сӑмах паратпӑр. Пайан нормӑна 270 процент парса, епӗ ыран, йуратнӑ ҫулпуҫ пысӑккӑн шаннине тивӗҫлӗ пулма, заданийе 300 тата ытларах та процент тултаратӑп.

— Епӗр, вӑтам тата кӗҫӗн хуҫалӑх ҫыннисем, — тенӗ участкӑ начальникӗ Васин йулташ, — хаклӑ Сталина, унӑн хӑватлӑ сӑмахӗсем ҫине планран ытлашши ҫӗркӑмрӑк парса ответлетпӗр. Ыранран пуҫласа манӑн участкӑ коллективӗ плана 100 мар, 125 процент паракан пулӗ. Кунпа епӗ парти пирӗншӗн, промышленнӑҫ командирӗсемшӗн тӑрӑшни ҫине ответлетӗп.

Суйлав округӗсем тӑрӑх

Халӑх кандидатсене палӑртат̆

Вӑрнар районӗнчи Санарпуҫ йалсоветне кӗрекен Ҫӗнӗ Йахакасси колхоз колхозникӗсен пӗрлехи пухӑвӗ Националнӑҫсен Советне депутата суйлама ССР Союзӗн Геройне Валерий Павлович Чкалов йулташӑн кандидатурине палӑртнӑ.

Йӗпреҫ районӗнчи „Молния“ колхоз колхозниксемпе колхозницӑсен пӗрлехи пухӑвӗ Кольцовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхоз председателне, орденоносеца Сергей Ксенофонтович Коротков йулташа Националнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата палӑртнӑ.

Йетӗрне районӗнчи Тури Ачакри „Крестьянская газета“ колхоз колхозникӗсен пӗрлехи пухӑвӗ хӑйсен председателне, орденоносеца—Андрей Михайлович Краснов йулташа Союз Советне депутата суйлама кандидата палӑртнӑ.

Засурскӑри (Йетӗрне р.) ут заводӗнчи рабочисемпе служащисем Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен Халӑх комиссарне Алексей Михайлович Розанов йулташа Националнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата палӑртнӑ.

Шупашкарта резинӑран йапаласем тӑвакан завод пулат̆

Чӑваш республикӗнче кӗҫех ҫӗнӗ пысӑк предприйати пулат̆: Шупашкарта резинӑран ҫӗвӗсӗр йапаласем туса кӑларакан завод ӗҫлеме пуҫлат̆. Вӑл заводра санитарипе гигийенӑ хатӗрӗсем (резинӑ перчаткӑсем, ӗмкӗчсем т. ыт.) туса кӑлармала.

Хальхи вӑхӑтра Главрезинӑ ҫӗнӗ завод строителстви йенӗпе ӗҫлекен управлени тунӑ. Хатӗрленӳлӗ ӗҫсене кӑҫалах тытӑнаҫҫӗ, 1938 ҫулхи ҫуркуннерен пуҫласа тӗп строителствӑ саралса каймала.

Заводӑн пӗррӗмӗш черетне килес ҫулхи 4-мӗш кварталра ӗҫе кӗртме палӑртнӑ. Унта 1.000 рабочи ытла ӗҫлемеле.

Завод ҫулталӑкра 25 мӗлйун тенкӗлӗх продукци кӑларакан пулат̆.

(ТАСС).

ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем! Аслă Совета тăван çĕршывăн паттăр патриочĕсене, рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн, социалисăмшăн нимĕн пăрăнми кĕрешекен борецсене суйлăр!

Сойуз Советне суйламали Шупашкар суйлав округĕ

Суйлав умĕнхи Округ канашлувĕ Сойуз Советне депутата суйлама Сталин, Калинин, Молотов, Ворошилов, Жданов, Андрейев, Каганович, Микойан, Йежов, Крупскайа йулташсене тата Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председательне Андрейева йулташа тата Националънăçсен Советне депутата суйлама Стецкий, Чкалов, Сахйанова, П. Д. Краснов йулташсене кандидата палăртрĕ.

Ĕнер Шупашкарти саслă кино-театрта Шупашкар суйлав округĕн суйлав умĕнхи округри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлува Шупашкар суйлав округне кĕрекен Шупашкар хулн, Тутаркас, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Çĕрпў тата Трак районĕсенчи заводсен, фабриксен, колхозсен, парти тата общественнăй организацисемпе ĕççынни общественнисен представителĕсем пĕтĕмпе 700 çын ытла пухăннă.

Канашлува Шупашкарти спирт заводĕнчи паллă стахановкă Перасковйа Иаковлевна Карамзина йулташ кĕскç сăмах каланипе уçрĕ.

Президиум суйланă хыççăн, канашлу хисеплĕ президиум суйларĕ.

— **Сталин!**

Аслă çулпуçăн йатне илтсенех, пĕтĕм залă ура çине тăрса тăвăллăн алă çупать, оркестр Интернационал выляТ. Сталинăн чи çывăх соратникĕсен—**Молотов, Каганович, Калинин, Ворошилов, Андрейев, Микойан, Жданов, Йежов, Косиор, Димитров** йулташсен йачĕсене асăнсан каллех тăвăллăн алă çупни тепĕр хут йанраса кайать: „Сывă пулчăр аслă Сталин йулташăн соратникĕсем—урра!“

„Пĕтĕм тĕнчери халăхсен çулпуçне аслă Сталина—урра!“

Чи пирвайах орденоносец Александр Василйевич Табаков сăмах илет. Вăл канашлу йачĕпе Сталин патне çыру йама сĕнет. Унăн сĕнĕвне канашлу тăвăллăн алă çупса йышăнать.

Сталин йулташ патне çыру йама йышăннă хыççăн, канашлу ССР Сойузĕн Аслă Советне тата Националънăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсем çинчен сўтсе-йавма тытăнать.

— Шупашкарти заводсемпе фабриксенчи рабочисен, инженерсемпе-техниксен тата служăщчисен йачĕпе Сойуз Советне депутата суйлама Иосиф Виссарионович Сталина (Тăвăллăн алă çупаççĕ, оркестр Интернационал выляТ), Клементий Ефремович Ворошилова (тăвăллăн алă çупаççĕ), Михаил Иванович Калинина (тăвăллăн алă çупаççĕ), Зойа Ананйевна Андрейевăна, Националънăçсен Советне—Алексей Иванович Стецкине кандидата тăратма сĕнетĕп,—тет Китайев йулташ.

Китайев йулташ хыççăн Тутаркас районĕнчи колхозниксен йачĕпе Орининари колхоз председателĕ Моисеев, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи рабочисен, инженерсен, служăщчисен тата колхозниксен йачĕпе—Фролов, Шупашкар районĕнчи колхозниксен йачĕпе—Дробышев, Трак районĕнчи колхозниксен йачĕпе—Димитрийева, комсомол организацийĕсенчен—Добрынин (Шупашкар хули), Сперанский (Шупашкар районĕ), Шупашкар хулинчи, Тутаркас, Ишлей, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпў тата Трак районĕсенчи коммунисла организацисен йачĕпе ПСК(б) Партин Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Смирнов т. ыт. йулташсем, пĕтĕмпе 19 çын, тухса каларĕç.

Вĕсем пурте пысăк хаваслăхпа ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне тата Националънăçсен Советне суйлама депутата И. В. Сталин, М. И. Калинин, В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, А. А. Жданов, А. А. Андрейев, Л. М. Каганович, А. И. Микойан, Н. И. Йежов, Н. К. Крупскайа, В. П. Чкалов, З. А. Андрейева, М. М. Сахйанова тата П. Д. Краснов йулташсене кандидата сĕнчĕç. Вĕсен сĕнĕвне канашлу пĕр саслăн йышăнчĕ.

Резолюци тата Шупашкар суйлав округĕнчи суйлавçăсем патне чĕнсе каланине йышăнсан тата доверреннăйсене суйласа çирĕплетсен канашлу хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ.

Шупашкар суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Сталин йулташ патне йанă çыру

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Эсре, пирĕн аслă учителе, ССРС халăхĕсен тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçне, епĕр пайан Октябĕрти социалисăмла Аслă революци пулни XX çулхи уйавĕ умĕн Шупашкар суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлăва пухăнса, фабриксемпе заводсенчи рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата колхозниксен пĕрлехи пухувĕсен представителĕсем, коммунисла организацисен, професçиле сойузсен, комсомол тата ĕççынни общественнисен представителĕсем, пурте питĕ те пысăк савăнăçлă тата мăнкăмăллă пулса, хамăр округри фабриксемпе заводсенчи рабочисем, служăщчисем, инженерла-техникла работниксем тата колхозниксем сирĕн кандидатурăна Шупашкар суйлав округĕ тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнине пĕр çын пек пулса хута кĕнине пĕлтеретпĕр.

Сирĕн кандидатурăна Аслă Совета депутата суйлама палăртни—пирĕн суйлав округĕнчи ĕççынни массисем пирĕн большевиксен Ленин—Сталин аслă партине, сана, пирĕн тăван аттемĕр Сталин йулташ, вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнине тата пĕтĕм вăйхăватне хурса ĕçленине кăтартакан питĕ те вăйлă демонстраци пулса тăчĕ.

Пирĕн сине—пире суйласа йанă суйлавçăсен çак пĕр кăмăллă шухăшне Сире пĕлтерес тата Сирĕнтен, хаклă Сталин йулташ, ССРС Аслă Совечĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама Горький суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшме ыйтас телей ўкнишĕн епĕр çĕкленсе савăнатпăр.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали историлĕ кунра—декабĕрĕн 12-мĕшĕнче—пирĕн округри кашни ĕççынни суйлав урнийĕ патне пырса, халăхсен телейлĕхĕшĕн кĕрешме хăйĕн пĕтĕм пурнăçне параканăн, пирĕн çĕршыври рабочи класа чуралăх сăнчăрне татăклăн çапса аркатасси патне, „халăхсен тĕрмин“ çуртне—патша влаçĕпе капиталисăма аркатса тăкасси патне тата социалисăмла çĕнĕ обществă туса çитересси патне илсе пыраканăн йатне çырнă бўллетене йарассине хăйĕн пысăк ĕçĕ тесе шутлĕ. Есĕр ăслăн йертсе пынипе, Сталин йулташ, пирĕн çĕршыв халăхсен хушшинчи патша влаçĕпе капиталисăм чĕртсе йаракан хирĕçўве йаланлăхах пĕтерчĕ, хамăрăн социалисăмла тăван çĕршыва капиталисла çĕршывсем, чăн малтан— фашисăм тата унăн агенчĕсем—тăван çĕршывăн ылханлă предателĕсемпе изменникĕсем, троцкисла-бухаринла бандитсем, буржуалă националиссем, шпионсем, диверсантсем, пирĕн çĕршывра тепĕр хут капиталисăмла строй туса хума тата ĕççыннисем çине каллех експлоатацине нациле пусмăрлăха тăхăнтартса лартма пăхакансем тапăнассинчен пĕр пулса тата пĕр кар тăрса сыхлама халăхсен пĕртан аслă сойузне турĕ. Ку сойуз халăхĕсем пĕр-пĕрин çине шанни никĕсĕ çинче тăрать.

Епĕр Сире, Сталин йулташ, пĕтĕм чăваш халăхĕ пĕр çын пек пулса Октябĕрти Социалисăмла Аслă Революци çĕнтерсе илнисене çирĕппĕн сыхласа тăрĕ тесе шантаратпăр.

Сывă пултăр пирĕн паха социалисăмла тăван çĕршыв!

Сывă пултăр ССРС халăхĕсен тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăванлă сыхăнувĕ!

Сывă пултăр большевиксен коммунисла партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă Сталин йулташ!

Аслă Совета суйламали Шупашкар суйлав округĕнчи ĕççыннисемпе обшчествăлă организацисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлувĕ йышăннă резолюци

Шупашкар суйлав округĕнчи рабочисен, служăщчисен, инженерла-техникла работниксен, научнăй работниксен коллективĕсен, коммунисла, комсомолла, професçиле тата ытти обществăлă организацисемпе ĕççынни общественнисен представителĕсен суйлав умĕнхи округ канашлувĕ питĕ пысăк савăнăçлă тата кăмăллă пулса, пирĕн округри предприйатисемпе колхозсенчи пĕрлехи пухусем пĕр кăмăллă пулса ССР Сойузĕн Аслă Советне Горький суйлав округĕнчен депутата суйлама тĕнчери чи демократиле Конституци тăвакан **Сталин** йулташăн кандидатурине тăратасси çинчен йышăннă решенисене хапăл тăвать.

Канашлу—Водосвет, Макарон фабрикĕнчи тата ытти предприйатисемпе организацисенчи рабочисем, служăщчисем, инженерсемпе техник работникĕсем, çавăн пекех тата округри колхозсенчи колхозниксем ССР Сойузĕн Аслă Советне Шупашкар суйлав округĕнчен депутата суйлама Сталин йулташăн соратникĕсен, коммунисăм ĕçĕшĕн Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешекен паттăрсен—пĕр улшăнмасăр Пĕтĕм Сойузри старăстă пулса ĕçлекен **Калинин** йулташăн, Совет правительстви пуçлăхĕн—**Молотов** йулташăн, Оборонă наркомĕн—ССР Сойузĕн пĕрремĕш маршалĕн—**Ворошилов** йулташăн, ПСК(б)П Тĕпком секретарĕсен—**Ждановпа Андрейев** йулташсен, Йăвăр промышленнăç комиссарĕн—**Кагановичч** йулташăн, Çимĕç промышленнăç комиссарĕн—**Микойан** йулташăн, Шалти ĕçсен комиссарĕн—**Йежов** йулташăн, **Н. К. Крупскайа** йулташăн кандидатурисене тăратма йышăннине хĕрўлĕн хапăл тăвать.

Канашлу çавăн пекех тата РСФСР-тан Горький суйлав округĕ тăрăх Националънăçсен Советне депутата суйлама Совет Сойуз Геройĕн— Валерий Павлович **Чкалов** йулташăн кандидатурине, Шупашкар суйлав округĕнчен Сойуз Советне депутата суйлама Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕн — Зойа Ананйева **Андрейева** йулташăн кандидатурине, Шупашкар хула суйлав округĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕн—Алексей Иванович **Стецкий** йулташăн кандидатурне, Шупашкар йал суйлав округĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиççин Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕн—Марийа Михайловна **Сахйанова** йулташăн кандидатурне, Çĕрпў суйлав округĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама Чăваш АССР Патшалăх План комиççи председателĕн—Петр Димитрийевич **Краснов** йулташăн кандидатурине тăратма йышăннине хĕрўлĕн хапăл тăвать.

Канашлу доверреннăй çынсем уйăрса, вĕсене обшчествăлă организацисемпе тата ĕççынни общественнисемпе пĕрле кашни суйлав участкинче хамăр суйлав округĕ тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсем çинчен—партипе совет правителстви руководителĕсем çинчен кашни суйлавçăна каласа пама чĕнет. Суйлавçăсене депутата тăратакан çынсен йачĕсем пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерĕвĕпе уйăрăлми таччăн сыхăнса тăни çинчен, вĕсен йачĕсем нациле пĕртанмарлăхпа пусмăрлăха пĕтернипе, експлоататăрла классене пĕтернипе, Социалисăмла Аслă революци урлă илнисем çине, ал хума тăнă троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла сутăнчăксене çĕмĕрсе тăкнипе çыхăнса тăни çинчен каласа памала.

Канашлу çавăн пекех тата доверреннăй çынсене округри кашни суйлавçăна Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă Çурçĕр Америкăна паттăрăн вĕçсе çитнĕ Чкалов çинчен каласа пама хушать.

Канашлу **Чкалов, Стецкий, Андрейева, Сахйанова, Краснов** йулташсене асăннă суйлав округĕсенчен баллотировкăна тăмашкăн килĕшў пама ыйтать.

Канашлу хамăр округри суйлавçăсем хăйсен сассине савăнăçлăнах хамăр çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн парасса шанса тăрать.

Сывă пултăр большевиксен хăватлă Коммунисла партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учителĕ Сталин йулташ!

Шупашкарти митинг

Нойабĕрĕн 1-мĕш кунĕнче; Аслă Совет депутачĕсене суйлама кандидатсем палăртнă йатпа Шупашкар ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ. Митинг Сойуз Советне суйламали Шупашкар округĕн суйлав умĕнхи канашлăвне килнĕ делегатсемпе пĕрле пулса иртрĕ.

Митинга Шупашкар суйлав округĕнчи суйлав комиççин председателĕ Каплин йулташ уçрĕ.

Трак районĕнчи ĕççыннисен йачĕпе—колхозница Дмитрийева, Тутаркас районĕнчи ĕççыннисен йачĕпе—Орининти „Хĕрлĕ Сормово“ колхоз председателĕ Моисеев, парти Чăваш Обкомĕн тата ЧАССР правителствин йачĕпе—партин Облăçри тата Шупашкар хулинчи комитетсен секретарĕ Петров йулташ сăмах тухса каларĕç.

Митинга пухăннă Шупашкар ĕççыннисем, Сойуз Советне суйламали Шупашкар округĕн суйлав умĕнхи канашлăвĕ ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсен йачĕсене пысăк хаваслăхпа йышăнчĕç. Митингри ĕççыннисем хăйсен сассисене чи малтан пĕтĕм совет халăхĕн аслă çулпуçне Сталин йулташа пама пулчĕç. Сталин йулташăн çывăх саратникĕсемшĕн Калинин, Молотов, Ворошилов, Жданов, Андрейев, Каганович, Микойан, Йежов, Стецкий, Крупскайа йулташсемшĕн тата Совет Сойуз Геройĕн Чкалов кандидатуришĕн, çавăн пекех Сахйанова, Андрейева, Краснов йулташсемшĕн активлăн сасăлама пулса, Шупашкар суйлав округĕнчи мĕн пур суйлавçăсене çак кандидатурĕсемшĕн тăма чĕнчĕç.

Пучахлă тырăсене 72.210 пин гектар çапнă, кĕр тыррисене 35.033 пин гектар акнă, кĕрхи çĕртме 37.337 пин гектар сухаланă

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн тата Совхозсен Халăх Комиссариачĕн пучахлă тырăсене çапасси, кĕр тыррисене акасси тата кĕрхи çĕртме тăвасси октябĕрĕн 25-мĕшне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКИ

Республикăсем, крайсем тата облăçсем	Çапнă: Пĕтĕмпе: Пин гектар	Çапнă: Пĕтĕмпе: Вырнă тăрăх проц-па	Çапнă: Вăл шутран (Вырнă тăрăх процентпа): Колхозсенче	Çапнă: Вăл шутран (Вырнă тăрăх процентпа): Совхозсен Халăх Комиссариачĕн	Кĕр тыррисене акнă: Пĕтĕмпе: Пин гектар	Кĕр тыррисене акнă: Пĕтĕмпе: План тăрăх проц-па	Кĕр тыррисене акнă: Вăл шутран план тăрăх процентпа: Колхозсенче	Кĕр тыррисене акнă: Вăл шутран: Совхозсенче: Совхозсен Халăх Комиссариачĕ	Кĕр тыррисене акнă: Вăл шутран: Совхозсенче: Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ	Кĕрхи çĕртме сухаланă: Пĕтĕмпе: Пин гектарпа	Кĕрхи çĕртме сухаланă: Пĕтĕмпе: План тăрăх проц-па	Кĕрхи çĕртме сухаланă: Вăл шутран план тăрăх процентпа: Колхозсенче	Кĕрхи çĕртме сухаланă: Вăл шутран: Совхозсенче: Совхозсен Халăх Комиссариачĕ	Кĕрхи çĕртме сухаланă: Вăл шутран: Совхозсенче: ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ
РСФСР	48853	75	74	94	23228	98	98	97	96	27830	56	56	51	61
Украина ССР	14686	98	97	100	9645	100	101	103	101	6085	51	51	66	63
Белорус ССР	1362	68	68	78	961	96	97	104	47	1020	63	64	92	38
Азербайджан ССР	672	94	95	100	239	37	37	85	48	64	20	21	—	17
Грузин ССР	423	96	96	—	201	68	69	—	—	45	17	17	—	3
Армйан ССР	319	95	97	—	89	74	77	—	—	58	32	32	—	40
Туркмен ССР	131	90	89	89	47	41	42	—	33	15	7	7	—	2
Узбек ССР	1007	92	91	100	48	8	8	11	8	74	6	5	18	9
Таджик ССР	425	86	87	100	19	11	12	—	—	10	4	4	—	3
Казах ССР	3731	89	88	92	363	82	86	35	36	2078	57	60	42	27
Киргиз ССР	581	83	80	85	193	88	88	117	102	58	13	12	19	26
РСФСР-не кĕрекен автономлă республиксем, крайсем, облăçсем														
Алтай крайĕ	2546	79	79	89	105	105	103	100	100	862	51	50	49	51
Инçет-Хĕвелтухăç крайĕ	434	78	76	100	11	99	99	—	—	305	63	64	54	33
Краснодар. крайĕ	2235	100	99	100	1170	79	75	94	97	474	25	23	36	88
Красноярск крайĕ	716	47	44	84	225	100	100	97	93	322	54	58	33	79
Орджоникидзе крайĕ	1766	94	95	100	1099	97	98	91	72	395	29	28	30	41
Архангелск облăçĕ	151	47	47	73	99	97	97	—	80	88	46	46	71	23
Вологодск обл.	482	61	61	72	262	100	100	108	—	255	49	49	68	—
Хĕвелтухăç Çĕпĕр облăç	247	28	26	65	144	99	98	93	102	64	43	44	20	15
Воронеж облăçĕ	1956	80	79	95	1317	100	101	102	100	1248	57	55	68	60
Горьки облăçĕ	1049	76	77	58	692	101	100	112	101	724	73	73	82	80
Иваново облăçĕ	566	78	78	83	334	103	102	106	94	348	64	63	56	73
Калинин облăçĕ	9 6	76	77	83	503	100	101	100	101	865	74	75	87	63
Киров облăçĕ	922	47	47	63	885	104	104	107	111	724	72	72	66	73
Куйбышев облăçĕ	2445	83	82	97	1034	98	99	100	104	1436	56	55	63	75
Курск облăçĕ	1636	90	88	90	1054	100	100	104	101	923	59	58	78	68
Ленинград облăçĕ	566	65	65	82	318	101	100	133	100	535	66	65	70	80
Мускав облăçĕ	446	74	72	98	255	101	101	110	106	346	74	70	106	91
Новосибир. обл.	1524	60	58	87	456	98	97	103	101	515	47	47	47	73
Омск облăçĕ	1753	74	72	89	341	99	100	86	76	796	50	49	54	54
Оренбург облăçĕ	2647	93	91	99	599	99	100	95	94	1405	54	54	56	47
Орел обл.	1479	82	84	83	972	100	103	112	101	1159	78	78	75	74
Ростов обл.	3028	99	100	99	1200	101	101	99	91	1233	45	44	46	47
Рйазань обл.	1154	83	83	90	788	100	100	107	107	777	65	65	75	80
Саратов облăçĕ	2429	84	83	93	885	96	96	97	100	1011	40	38	48	84
Свердловск облăçĕ	841	44	45	49	610	101	100	106	101	707	55	54	32	59
Смоленск обл.	901	73	73	69	537	103	103	109	100	713	66	65	78	74
Сталинград облăçĕ	2795	91	91	99	956	102	102	104	100	1766	61	61	68	26
Тамбов обл.	1086	69	70	78	904	108	100	100	100	620	45	44	51	54
Тула обл.	798	76	75	73	527	101	101	100	105	684	77	77	117	81
Челябин облăçĕ	2308	78	76	96	482	100	101	93	102	1128	56	57	45	73
Йарославль облăçĕ	515	70	70	60	287	102	102	100	101	315	52	51	60	63
Тутар АССР	1280	57	56	69	1028	100	100	100	102	1678	85	87	50	90
Башкир АССР	1517	59	56	97	862	100	101	99	89	1535	68	68	60	63
Дагестан АССР	234	77	92	100	101	53	52	94	52	25	14	12	33	61
Бурйат-Монгол АССР	150	31	30	81	44	100	100	—	—	31	25	25	38	23
Кабард.-Балкар. АССР	100	100	100	99	82	101	101	101	97	55	73	76	70	84
Калмык АССР	100	74	70	96	69	99	102	84	94	56	40	45	27	27
Карели АССР	18	41	42	—	14	100	100	—	—	20	56	56	—	—
Коми АССР	26	46	46	—	18	103	104	—	102	19	54	53	—	68
Крым АССР	743	100	100	100	533	96	94	94	90	114	34	32	26	42
Мари АССР	150	42	43	—	190	100	100	—	114	140	66	66	—	97
Мордва АССР	584	86	89	83	332	102	103	98	103	325	44	44	77	74
Атăлхĕрри нимĕçсен АССР	888	84	84	98	284	100	100	99	96	499	49	49	58	45
Çурçĕр-Осетин АССР	28	100	100	—	18	71	71	—	—	24	53	54	—	—
Удмурд АССР	275	40	40	52	329	101	100	117	100	285	63	63	63	45
Чечен-Ингуш АССР	105	89	94	100	450	47	43	100	59	29	34	32	83	47
Чăваш АССР	313	67	66	—	221	101	103	—	100	243	75	75	—	107
Йакут АССР	5	9	—	96	2	63	67	—	—	9	19	14	96	—
УССР-не кĕрекен автономлă республиксем, облăçсем														
Винница облăçĕ	862	94	94	98	605	101	101	100	98	284	35	24	77	65
Днепропетровск облăçĕ	2504	100	100	100	1727	100	100	103	100	940	54	53	63	55
Донецк облăçĕ	16.5	100	100	100	871	104	101	103	98	1008	69	68	77	58
Житомир облăçĕ	561	91	91	71	496	103	103	100	—	236	40	41	29	—
Каменец.-Подол облăçĕ	652	95	95	83	451	101	101	100	105	241	41	41	75	99
Кийев облăçĕ	1149	97	97	90	770	103	102	111	100	391	37	37	56	56
Николайевск обл.	1771	99	99	100	1293	101	101	101	104	492	45	43	52	82
Одесса облăçĕ	1319	98	98	100	996	101	101	102	99	340	36	35	59	67
Полтава облăçĕ	1268	99	99	98	828	104	104	108	95	638	60	59	72	70
Харйков облăçĕ	1273	97	97	98	807	102	101	108	101	654	60	59	75	80
Чернигов облăçĕ	1048	94	95	96	676	103	102	131	99	760	70	71	79	58
Молдави АССР	297	100	100	—	2.3	100	100	—	—	93	43	43	—	—
Пĕтĕмпе ССРС тăрăх	72210	80	79	95	35033	95	95	95	89	37337	53	54	52	53
1937 çулхи 20-X пулнă	71117	79	78	94	34585	93	94	94	88	32964	47	47	46	48
1936 çулхи 25-X пулнă	—	—	—	94	36371	95	96	97	86	43750	65	67	58	62

Асăрхаттарни: 1. Инçет-Хĕвелтухăç крайĕ тата Хĕвелтухăç Çĕпĕр облăçĕ—кивĕ чикĕсемпе.
2. Хĕвелтухăç-Çĕпĕр облăçĕ тăрăх сведенисене октябĕрĕн 15-мĕшне кăтартнă.
3. Украина СРС облăçĕсем тăрăх уйрăм хуçалăхсемпе совхозсене, Совхозсен халăх комиссариачĕсĕр пуçне кăтартман, УССР тăрăх пĕтĕмĕшпе çеç кăтартнă.

Çĕмĕрле хатĕрленет

Çĕмĕрле хулинчи ĕç халăхĕ Аслă Октябĕр уйавне пысăк çĕкленўпе хатĕрленет. Заводсенче, цехсенче, шкулсенче, клубсенче, столовăйсенче, суту-илў организацисенче пур çĕрте те хатĕрленў ĕçĕ хĕрўллĕн пырать. Кунран кун çĕнĕ магазинсем, çĕнĕ çуртсем ўсеççĕ, урамсем илемленеççĕ. Базар урамĕнче хаçат-журналсем сутакан киоскă çурчĕ, вăрманпромхоз патĕнче çĕнĕ магазин тăваççĕ. „Большевик“ заводра 8 хватерлĕ 2 хутлă çурт туса çитереççĕ. Комбинатăн посолкинче урамсене торцовкă сараççĕ. Нумай пулмасть комбинатра клуб тума тытăнчĕç.

Комбинатри „Большевик“ тата „Тружевик“ завочĕсенчи 412 рабочи Аслă Октябĕр революци 20 çул тултарнине хăйсем лартнă çĕнĕ çуртсенче уйавлаççĕ.

Художниксем Аслă уйав кунĕнче демонстрацине тухакан колонăсене тумлантарма лозунгсем, плакатсем, картинсем çыраççĕ. Комбинатăн кашни цехри рабочисен колонни хăйсем кăларлакан продукцисен моделĕсемпе тумланать. Авакан цехри рабочисем пукансен моделĕсене, хăма çуракан цехри рабочисем рамă т. ыт. тăваççĕ.

Каçхине хĕрлĕ кĕтессенче, клубсенче, цехсенче, хватерсенче демонстрацине тухма йурăсем вĕренеççĕ.

(Хамăр инфор.).

Ватă тимрĕç калавĕ

ЙĔПРЕÇ. Федор Красильников—„Çиçĕм“ колхозра чи ватă тимрĕç. Вăл ĕлĕкхи патша саманинчи асаплă пурнăç çинчен хăрушшăн аса илсе, хальхи çамрăксене каласа кăтартать.

— Епĕр питĕ чухăн пурăнаттăмăр,—тет вăл калавне пуçласа.—Манăн атте те, асатте те тимрĕçсем пулнă. Пире çĕр паман. Çавăнпа та епĕр пуйансем патĕнче кунĕн-çĕрĕн тимрĕç ĕçĕ ĕçлесе пурăнаттăмăр. Мана атте пĕр çуркунне (епĕ унчухне 12 çулта пулнă) Ирçе-çармăс йалĕнчи Наумов пуйан патне ĕçлеме йачĕ. Питĕ те йăвăрччĕ аттерен, тăван килйышран кулак аллине уйăрлса кайма. Пурăнма хĕнччĕ. Наумов кулак пĕчĕк ĕçшĕнех хĕнеччĕ, йатлаçа хăртаччĕ. Кунта виçĕ çул ĕçленĕ хыççăн Арапусĕнчи Пиньтуков кулак патне тимĕрçĕ ĕçлеме кĕтĕм. Пиньтуков патĕнче 3 çултан ытла тўссе пурăнаймарăм. Вунсакăр çулхи йĕкĕт Серебрйаков хуçа патне кайса кĕрĕшрĕм. Пĕтĕм вăйа хурса ĕçлесен те, ĕçукçи тăранса пурăнма та аран-аран çиткелетчĕ. Тумланасси çинчен калаçмали те пулман.

Вунтăхăр çула çитсен авланса йатăм та, Кĕлĕмкасси йалне, хамăр пĕлĕшсем патне килсе вырнаçрăм. Кунта чылай тертленнĕ хыççăн çĕр пачĕç. Ачалă-пăчалă, семйелĕ пултăм, хытă çĕр çивче ярлансем пек чакаланса пурăнтăм.

— Акă, йулашкинчен, Октябĕр революцийĕ пулчĕ,—хавасланса калама пуçлать Федор Красильников мучи.—Икĕ ывăлăм—Йегорпа Николай Хĕрлĕ çара кайрĕç. Вĕсем совет влаçĕшĕн çапăçса пуçĕсене хучĕç, таврăнмарĕç. Анчах ывăлăмсен йунĕ тăканни харама каймарĕ. Совет влаçĕнче акă çирĕм çул хушши савăнса пурăнатпăр. Çамрăк чух куççуль нумай йухтарнă, хĕпĕртесе курман епĕ. Ун вырăнне ватлăхра телейлĕ пурăнма пуçларăм. 68 çула çитиччен тимĕрçре ĕçлетĕп. Колхозра çеç телей тупрăм. Çамрăк чухне вĕренеймерĕм епĕ. Халĕ вулама тата алă пусма пĕлетĕп.

Пире çак телейлĕ пурнăçа йуратнă çулпуç Сталин йулташ туса пачĕ. Çавăнпа та епĕ Аслă Совета суйланă чухне Сталиншăн, Молотовшăн, Калининшăн, Ворошиловшăн, Йежовшăн, Ждановшăн сасăлатăп.

Федор мучи халь пуйан пурăнать. Унăн хăйĕн пўрт, ĕне, сурăхсем, чăхсем, хурсем т. ыт. пур. Çаксене вăл пурне те Октябĕр революци хыççăн тин туйаннă. Пĕр ывăлĕ халь Бакура, Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн органĕнче ĕçлет, икĕ ывăлĕ граждан вăрçинче çапăçса вилнĕ. Красильников колхозра паллă стахановец, тимрĕç. Кăçал пĕччен 375 ĕçкунĕ тунă, уншăн вăл 176 пăт тĕштырă, пахча-çимĕç тата пайтах укçа илет. **Г. Марушев.**

ССР СОЙУЗĔН АСЛĂ СОВЕТНЕ СУЙЛАС УМĔН

ÇĔРПУ РАЙОНĔ

Йантушри „Çамрăк вăй“ колхоз колхозникĕсем

Валерий Павлович Чкалова

Националђнăçсен Советне депутата суйлама палăртрĕç

Йантушри „Çамрăк вăй“ колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухувĕ октябрĕн 29-мĕшĕнче каçхине пулса иртрĕ. Пухура колхозниксем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националђнăçсен Советне депутата Горький округĕ тăрăх суйлама кандидата Совет Сойузĕн Геройне полковник Валерий Павлович Чкалов йулташа палăртрĕç.

Колхозница-коммунистка Йевдокимова Фекла, Чкалов йулташа Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртма сĕнсе, Чкалов йулташăн иртнĕ кунçулĕпе халђхи паттăрла ĕçĕсем çинчен тĕплĕн калаçа пачĕ.

— Халăхшăн, халăх телейĕшĕн Чкалов йулташ пĕтĕм чĕрине парса ĕçлет. Ирсĕр, урса кайнă фашиссем пирĕн çĕршыва тапăнма пуç çĕклесен, Чкалов вĕсене пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе тăкассишĕн,— пĕтĕм вăйне хурса кĕрешĕ,—тет Йевдокимова йулташ. Пухури халăх ку сăмахсене тăвăллăн алă çупса йышăнчĕ.

Трибунă çинче колхозница Улђйана Петрова.

— Епĕр ĕлĕк хĕрарăмсем пухусене тухма пултарайман. Пире—пухува тухсан çылăх пулать, пухува тухнăшăн тамăка йараççĕ, вĕри çатма çулаттараççĕ, тесе хăратнă. Епĕр хура пÿртре пурăннă. Пире, хура пÿртре пурăнаканнисене, шурă пÿртрисем хисеплемен,—тет Петрова колхозницă. Вăл халђхи пурнăçа ырласа, Сталин йулташа тав тăвать.

— Чкалов—Сталин пăхса ÿстернĕ шанчăклă çынсенчен пĕри, ăна Аслă Совета суйламалла,—тесе вĕçлет Петрова йулташ хăйĕн сăмахне.

Ĕлĕкхи „суйлавсемпе“ халђхи суйлавсем хушшинчи уйрăмлăх çинчен тĕплĕн калать пилĕкмĕш бригадăн бригадирĕ Никифоров Иван.

— Хурал пÿртне старăстăна суйлама пухăнаттăмăр. Кĕрекере—куштансем ларатчĕç. Вĕсем пире çăвар уçма паман. Халĕ епĕ совет гражданинĕ пĕтĕм халăх шаннă çыншăн хам пĕлнĕ пек, хам ирĕкпе сасăлатăп.

Колхоз председателĕ С. Г. Григорйев йулташ хăйĕн сăмахĕнче В. П. Чкалов йулташăн кандидатурине ырласа, колхозниксене суйлав кунĕ тĕлне тата хастарлăнрах ĕçлеме, тата пысăкрах çитĕнÿсем тума чĕнчĕ.

Пуху Националђнăçсен Советне депутата Горький округĕ тăрăх суйлама кандидата Совет Сойузĕн Геройне полковник Валерий Павлович Чкалов йулташа палăртса, резолђуци йышăнчĕ.

Йантушри „Çамрăк вăй“ колхоз членĕсен суйлав умĕнхи аслă пухувĕ йышăннă резолђуцирен

Аслă совет халăхĕн чаплă ывăлĕсенчен пĕри, вăл—Валерий Павлович Чкалов. Чкалов йулташ Совет Сойузĕн Геройĕ, партипе правителствă заданине пурнăçланă çĕрте нимĕнле йăварлăх, нимĕнле хăрушлăх умĕнче те чарăнса тăмасть. Валерий Павлович—Горький пролетариачĕн мухтавлă ывăлĕ, пирĕн земђак. Вăл халăх ĕçне тунă çĕрте пĕтĕм чĕрине парса ĕçлет. Вăл Мускавран Çурçĕр полђусĕ урлă Америкăна вĕçсе кайса, ку таринччен никам уçма хăйман çула хурçă кайăк çуначĕпе касса уçрĕ. Вăл тÿрĕ кăмăллă, таса чĕрелĕ, çивчĕ сисĕмлĕ, хурçă пек çирĕп çын. Епĕр ăна мĕн пур чĕререн шанатпăр.

Çавăнпа та епĕр Çĕрпÿ районĕнчи Йантушри „Çамрăк вăй“ колхоз членĕсем Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата Совет Сойузĕн Геройне полковник Валерий Павлович Чкалов йулташа палăртатпăр. „Çамрăк вăй“ колхоз членĕсен пухувĕ Чкалов йулташран, вăл Националђнăçсен Советне депутата суйлама пирĕн округ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшнине пĕлтерме ыйтать.

—— О ——

ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔ

Çĕмĕрлери С. П. Петров йачĕпе тăракан комбинатри рабочисем, служăщисем тата инженерлă-техниклă работниксем ПСК(б)П Çĕмĕрле райкомĕн пĕрремĕш секретарне

Иван Василйевич Новикова

Националђнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă

Комбинатăн клубĕнче туллийех халăх. Рабочисем, инженерсем, техниксем, служăщисем, килхуçи хĕрарăмĕсем Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртма пухăннă. Трибунă çине чи малтан столђар цехĕнчи партире тăман рабочи-стахановец Федотов йулташ тухать.

Федотов йулташ сăмахĕ

Йулташсем, Совет Сойузĕнчи пĕтĕм ĕççыннисем Совет влаçĕн Аслă органне суйлас кун çитесси инçе мар. Вăл кун—декабрĕн 12-мĕшĕ—пĕтĕм ĕç етемлĕхĕн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ праçникĕ пулать.

Совет çĕршывĕнче çеç ĕççыннисем Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе пĕтĕм тĕнчипе историлĕ çĕнтерÿсем турĕç, влаçăн Аслă органне суйлама тата суйланма та права кĕрешсе илчĕç.

Пирĕн тăван çĕршыв 20 çул хушшинче пысăк ĕçсем, аслă çĕнтерÿсем турĕ. Ĕлĕкхи помещиклекапиталисăмла Росçийăра ĕççыннисен нимĕнле права та пулман, вĕсем хутла та пĕлмен. Унчухне епĕр чухăн пурăннă, тĕттĕм, нÿрĕ подвалсенче тертленсе пурăннă. Талăкра 14-шер сехет ĕçленĕ. Епĕ 16 çула çитсен Сормовори завода ĕçлеме кĕнĕ. Ĕçшĕн пит сахал тÿлеччĕç тата çитменне тăтăшах мăшкăлаччĕç.

Епĕр, болђшевиксен партийĕ йертсе пынипе, ĕçлев прави, вĕренÿ прави, канăç прави кĕрешсе илтĕмĕр,—Сталинла Конституцире çак правасем çинчен ылттăн саспаллисемпе çырса хунă.

Манăн халђхи пурнăçа илер. Манăн тăватă ача. Асли Мускавра педагогикă институтĕнче вĕренет, хĕрача вăтам шкултан вĕренсе тухать. Епĕ ĕçукçи пурăнма çителĕклĕ илетĕп. Хаваслă, кулђтурăлă пурăнатпăр, килте, тăтăшах хаçат-журналсем вулатпăр.

Ленин—Сталин партийĕ çак иртнĕ 20 çул хушшинче çирĕп те тÿсĕмлĕ болђшевиксене сахал мар ÿстерчĕ, вĕсем хăйсен пĕтĕм пурнăçне ĕççыннисен телейĕшĕн, социалисăмшăн кĕрешес ĕçе параççĕ, коммунисăмлă обществă тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ (Тăвăллăн алă çупаççĕ) Коммунисла партин Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ Иван Василйевич Новиков йулташ çавăн пек болђшевиксенчен пĕрийĕ пулса тăрать.

Епĕ хамăр коллективăн йачĕпе Новиков йулташа Националђнăçсен Советне суйлама кандидата палăртма сĕнетĕп, пур йулташсене те унăн кандидатуришĕн тăма чĕнетĕп. (Алă çупаççĕ).

Çĕмĕрлери С. П. Петров йачĕпе тăракан комбинатри рабочисен, служăщисен тата инженерлă-техниклă работниксен суйлав умĕнхи пухувĕ йышăннă резолђуцирен

Епĕр, Çĕмĕрлери С. П. Петров йачĕпе тăракан комбинатри рабочисем, служăщисем тата инженерлă-техниклă работниксем, Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртасси çинчен сÿтсе-йавнă хыççăн, пурте пĕр кăмăллă пулса Çĕмĕрле суйлав округĕнчен Националђнăçсен Советне депутата суйлама Иван Василйевич Новиков йулташа кандидата палăртатпăр.

Новиков йулташ—активлă общественник. Вăл партин тата халăхăн тăшманĕсене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешсе пырать. Новиков йулташ хăйĕн пĕтĕм ĕçĕсемпе коммунисла партин ĕçĕшĕн, социалисăм строителстви ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăнине кăтартса пачĕ.

Епĕр Новиков йулташа Националђнăçсен Советне суйламали Çĕмĕрле суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатпăр.

Епĕр хамăрăн суйлав округĕнчи ĕççыннисене пирĕн сĕнÿ çумне пĕрлешме, Новиков йулташ кандидатуришĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Сывă пултăр Ленин—Сталин аслă партийĕ!

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ!

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ РАЙОНĔ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи С. П. Петров йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем

Алексей Михайлович Розанова

Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртнă

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи С. П. Петров йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пĕрлехи пухувĕ йышăннă резолђуцирен

Епĕр, С. П. Петров йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем, Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидатурă палăртма пухăнса, пире савăнăçлă пурнăç туса паракана, халăхсен çулпуçне, тĕнчери чи демократилĕ Конституцийе тăвакана—Сталин йулташа хĕрÿлĕ салам йăратпăр.

Епĕр, колхозниксем, лайăх пĕлетпĕр, ССР Сойузĕн Аслă Советне чи лайăх çынсене, парти ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен çынсене, халăх тăшманĕсене пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе, аркатса пыракан çынсене, пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыва малашне татах чечеклентерме пулăшакан çынсене суйламалла.

Епĕр, С. П. Петров йачĕпе тăракан йалхуçалăх ертелĕн колхозникĕсем, Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата Йетĕрне суйлав округĕ тăрăх чи лайăх çынна, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн парăнса ĕçлекене, Чăваш АСС Республикĕнчи Шалти ĕçсен халăх комиссарне — Алексей Михайлович Розанова палăртатпăр.

Пуху Розанов йулташран Йетĕрне суйлав округĕ тăрăх Националђнăçсен советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтать.

Епĕр хамăрăн представителсене округри суйлав умĕнхи канашлусенче Розанов йулташ кандидатуришĕн тăма хушатпăр.

Сывă пултăр тĕнчери чи демократилĕ Конституцийе тăвакан, пирĕн аслă учител, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ!

—— О ——

ПАТĂРЙЕЛ РАЙОНĔ

Патăрйел районĕнчи „Хĕрлĕ йалав“, „Трактор“, Сталин йачĕпе тăракан, Шмидт йачĕпе тăракан колхозсем Националђнăçсен Советне депутата суйлама

Олђга Тихоновна Харитоновăна

палăртнă

„Хĕрлĕ йалав“ колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен пĕрлехи пухувĕ йышăннă резолђуцирен

Епĕр, „Хĕрлĕ йалав“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, Националђнăçсен Советне Патăрйел суйлав округĕнчен депутата суйлама хамăрăн районри паллă учителђницăна Олђга Тихоновна Харитоновăна сĕнетпĕр.

Харитонова йулташран Националђнăçсен Советне хамăр Патăрйел суйлав округĕнчен баллотировкăна тăмашкăн килĕшÿ пама ыйтатпăр.

—— О ——

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Хĕрлĕ Çăлтăр“ колхоз

Андрей Михайлович Краснова

Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратнă

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Хĕрлĕ Çăлтăр“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухувĕ йышăннă резолђуцирен

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх кандидатурă тăратасси çинчен сÿтсе-йавнă хыççăн, епĕр, „Хĕрлĕ Çăлтăр“ колхоз колхозникĕсем, колхоз строителствинчи лайăх руководител пулса ĕçлекене, Ленин—Сталин партине парăнса ĕçлекене, социалисăмлă тăван çĕршывăн патриотне, Йетĕрне районĕнчи „Крестьянская газета“ колхоз председателне — орденоносец Андрей Михайлович Краснова Сойуз Советне депутата суйлама Çĕмĕрле округĕ тăрăх кандидата тăратпăр.

Колхозниксен пĕрлехи пухувĕ Краснов йулташран Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтать.

—— О ——

КУВАКИНĂ РАЙОНĔ

Кувакинă районĕнчи „Красный передовик“ колхоз

Тамара Алексейевна Моисейевăна

Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртнă

Кувакинă районĕнчи „Красный передовик“ колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен пĕрлехи пухувĕ йышăннă резолђуцирен

Епĕр, „Красный передовик“ колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем Аслă Совета кандидатурă тăратасси çинчен сÿтсе-йавнă хыççăн, Националђнăçсен Советне депутата суйлама Улатăрти паровозсем йусакан заводри паллă стахановкă, общественницă, ПСÇЛКС членĕ пулса тăракан Тамара Алексейевна Моисейевăна сĕнетпĕр. Моисейевă йулташран Националђнăçсен Советне депутата суйланма Улатăр суйлав округĕнчен баллотировкăна тăмашкăн килĕшÿ пама ыйтатпăр.

Совет халăхĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хăйĕн кандидачĕсене тăратать

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали суйлав кампанийĕ пĕтĕм Совет Сойузĕнче анлăн сарăлса кайрĕ. Суйлав кампанийĕ Совет халăхĕн хаваслă демонстрацийĕ пулса тăчĕ. Пирĕн аслă тăван çĕршыври пур халăхсем те пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм хăватпа Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, тăван болђшевикла партипе унăн Тĕп Комитечĕшĕн, тăван Совет правителствишĕн тăнине кăтартаççĕ.

ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем суйлав умĕнхи пухусенче Совет Сойузĕ пит пысăк, пĕтĕм тĕнчипе историлĕ çĕнтерÿсем туни çинчен хаваслансах калаççĕ, телейлĕ пурнăç панă Сталин йулташа ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама пĕрремĕш кандидата тăратаççĕ.

Ĕççыннисем пурте пĕр кăмăллă тата çĕкленÿлĕ пулса Сталин йулташăн çывăх соратникĕсене — Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Андрейев, Микойан, Чубарь, Жданов, Йежов йулташсене ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата тăратаççĕ.

Йулашки кунсем хушшинче Сойуз Советне депутата суйламали кандидата тата çак йулташсене тăратнă:

Чукунçул çинчи паллă стахановеца, октябĕр чукунçулĕ çинчи пĕрремĕш кривоносовеца, халĕ Сортировочная - Витебская депо начаљникĕ пулса ĕçлекен В. Д. Богданов йулташа — Гатчино Витебская чукунçул узелĕнчи ĕçлекенсенчен; заставă лайăх ĕçленишĕн тăвата хут поощрени тата наградăсем илнĕ пограничнике А. М. Абрамов йулташа — „Заря Социализма“ ертелри колхозниксенчен (Белорус СС Республикĕнчи Заславђ районĕ); Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автозавод директăрне И. А. Лихачев йулташа — Курск облаçĕнчи Касторнайри МТС работникĕсенчен; Машиностройени Халăх Комиссарне А. Д. Брускин йулташа — Златоустри Ленин йачĕпе тăракан инструменталђнăй комбинатран; колхоз строителствинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен колхозницă-орденоноскăна Е. И. Волкова йулташа — „Красный колос“ колхозран (Орджоникидзе крайĕнчи Аполоновск районĕ); Дагестанăн паллă халăх поетне-орденоносеца Сулейман Стаљскине — Избербаш нефт промыслинчен (Дагестан); Белорус çар округĕн командуйушчине пĕрремĕш рангри командарма И. П. Белов йулташа—Белорус СС Республикĕнчи Борисов суйлав округĕнчи Прйамино МТС работникĕсенчен; Ивановори фабрикăра малта пыракан стахановкă пулса ĕçленĕ, хале Иваново мануфактури фабрикĕн директăр заместителĕ пулса ĕçлеме лартнă Е. А. Гонобоблева йулташа—Иваново хули суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлуран.

Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнисен хисепĕнче:

Хăйулă полђарник Совет Сойузĕн Геройĕ И. Д Папанин — Онегăри заводран (Карел АССР, Петрозаводск суйлав округĕ); Çурçĕр çулĕн тĕп тытăмĕн начаљникĕн заместителĕ Совет Сойузĕн Геройĕ М. И. Шевелђов — Киров йачĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен фабрикран (Çурçĕр Осети, Орджоникидзе хулинчи центрти суйлав округĕ); Хура Тинĕс флочĕн командуйушчийĕ, челђускинцăсене çăлнă експедицин активлă членĕ, „Красин“ ледокол çинчи експедицин начаљникĕ пулнă орденоносец П. И. Смирнов-Сверловски — Йевпаторири трикотаж фабрикĕнчен (Крым); вылђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри стахановкă орденоноскă Е. Д. Граубергер — „Болђшевик“ колхозран (Атăл тăрăхĕнчи нимĕçсен АССР, Лизендергей районĕ); Туймазинри сысна ĕрчетекен совхозра ĕçлекен комбайнер-орденоносец Х. Х. Утйашев — Башкир АСС Республикĕнчи Туймазинри сысна ĕрчетекен совхозра ĕçлекенсенчен.

(ТАСС).

Петр Николайевич Грачов

Кирек мĕнле организацин пухувĕнче те унăн йатне асăнаççĕ. Ырлаççĕ, мухтаççĕ ăна. Ытти рабочисене унтан пример илме сĕнеççĕ.

— Пирĕн Грачов йулташ пек ĕçлемеле. Грачов производствăра стахановец, вĕренÿре—отличник, ирĕкре—чи примерлисенчен пĕрийĕ, теççĕ комбинатри рабочисем. Вăл çын ырă йата илтме тивĕçлĕхлĕ пулнă, хăйĕн пултарулăхне кăтартнă.

Профсойуз членĕсен пухувĕ Грачова музыкпа мебелђ сойуз Тĕпкомĕн сиесне кайма делегата суйларĕ. Комсомолăн Облаçри XIV мĕш конференцийĕ Обком пленумĕн членне суйланă.

Петр Грачов Çĕмĕрлене килни султалăк çеç. Кунта килеччен Астрахаљ хулинче ĕçленĕ. Хĕрлĕ çарта пулнă. Унчен ниçтах та тухса çÿремен, колхозра ĕçленĕ.

— Пурнăçра çав тери пысăк улшăну пулчĕ манăн. Шутлатăп та хам та тĕлĕнетĕп. Вĕт пĕр 5—6 çул каялла мĕнлескер пулнă епĕ. Урара манăн çăпата, çийĕмре тăла пиншак пулнă. Хула сăн-сăпатне те курман,—терĕ вăл хăй пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каланă чухне.

Халĕ Грачов комбинатра паллă столђăр, стахановец. Комбината килеччен вăл столђăр ĕçĕпе ĕçлемен, ашшĕ столђăр ĕçĕпе хăтланнăран çеç килте чухне хăшпĕр çăмăл ĕçсене тукаланă.

Грачов йулташ комбината кĕрсенех нормăна тултарса ĕçлеймен. Темчул тăрăшса ĕçлесен те çав çавах пулнă. Техникăна вĕренмели кружоксене çÿреме пуçласан çеç ĕç ăнса, майлашса кайнă. Нормăна тултарса пынă. Кăçал уйăхри нормăсене 150—170 проц. тултарса ĕçлеме пуçларĕ. Йулашки кунсенче кулленхи ĕç нормине 3 сехет хушши ĕçлесех тултаракан пулчĕ (Вăл шкаф хатĕрсене тăвать). Продукци пахалăхĕ пуринчен те лайăх, приемщиксем йаланах „отлично“ йе „хорошо“ паллăсемпе илеççĕ.

Грачовăн ырă примерĕ ĕç планне тултарнинче кăна мар. Вăл столђăрсемпе пухăнса ĕçе татах та лайăхлатасси çинчен калаçать, хаçат-журналсем вуласа парать, Сталинла Конституципе ССРС Аслă Советне суйламали Положени çинчен ăнлантарса парать. Кунсăр пуçне тата парти комитечĕ ăна килхуçисем хушшинче суйлав саккунне вĕрентессипе 14-мĕш çуртра пурнакансем çумне çирĕплетнĕ. Вăл халĕ агитатăр пулса ĕçлет. Грачов нумай вĕренмен, 4 çул çеç йалти шкултан вĕренсе тухнă. Вĕренес кăмăлĕ унăн çав тери пысăк. Кăçал, килте вĕренмели вăтам шкула çырăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ каçсерен физикă, хими, йестествоведени предмечĕсене вĕренет. Иртнĕ çулта комсомол райкомĕ организациленĕ комсомол активĕсен шкулĕнче вĕренчĕ. Калас пулать, унта та кайра пыман вăл, малтисемпе танах пынă. Çавăнпа та килте вĕренсех вăтам пĕлÿ илмели шкултан та вĕренсе тухма пысăк шанчăк пур унăн.

Халĕ Петр Николайевич Грачов Çĕмĕрле округĕнчи суйлав комиссин членĕ пулса ĕçлет.

Çакăн пек ĕнтĕ хастарлă комсомолецăн—стахановецăн сăнсăпачĕ.

Хар. Лисин.

—— О ——

Епĕр Ленин—Сталин партийĕшĕн сасăлатпăр

Шемшер йалĕ чухăн, тĕттĕм йал пулнă. Йĕркеренех хура, чалăшса кайнă çуртсем ларнă. Йалти кулаксем хресченсен хура тарĕпе тунă пысăк çуртсенче пурăннă. Хут пĕлекенсем 3—4 çынран ытла пулман, Октябĕр револђуци кăна хресченсене нушалă пурнăçран, тĕттĕмлĕхрен хăтарчĕ. Халĕ йалта хут пĕлмен çын пачах çук. Ĕлĕкхи хура тайлăк çуртсем вырăнне колхозниксем çутă, таса 2—3 пÿлĕмлĕ çĕнĕ çуртсем лартса тухрĕç. Числă ĕçленипе колхозниксем 600—700-шер пăт тырă илеççĕ, пуйан та кулђтурăлă пурнăçпа пурăнаççĕ.

Çак 20 çул хушшинче Шемшер йалĕнчен инженера 2 çын, çар техникне—1, çар врачне—2, аслă лейтенанта—1, учителе—7, врача—3, агронома—3 çын вĕренсе тухрĕç. Аслă шкулсенче 5 çын, вăтам шкулсенче 10 çын, тулли мар вăтам шкулта 17 çын вĕренеççĕ. 21 çын ытла тĕрлĕ государствă учрежденийĕсенче, фабрик-заводсенче ĕçлеççĕ.

Хамăрăн тăван çĕршыва сыхлама кăçал 3 çамрăк Хĕрлĕ çара карĕç. «ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине» вĕренме 5 кружок организациленĕ. Кружока пурĕ 150 суйлавçă çÿрет. —Пирĕн Аслă Советăн пирвайхи депутачĕ—пире телейлĕ, пуйан та кулђтурăлă пурнăç паракан—аслă Сталин пулать, епĕр уншăн сасăлатпăр,—теççĕ колхозниксем.

В. Захаров.

—— О ——

Октябĕр тивлечĕпе ÿснĕ хĕрарăм

Ĕмĕр чуралăхра нуша курса пурăннă ĕçхалăхне Социалисăмла Аслă револђуци ирĕке кăларчĕ. Тĕпел кукринчен ниçта хăпса тухма пултарайман ĕçхĕрарăмне арçынпа пĕртан правасем пачĕ.

Модина Йекатеринă октябĕр тивлечĕпе çĕнĕ савăнăçлă пурнăç çулĕ çине тăчĕ.

Епĕр çакăн пек ирĕклĕ, савăнăçлă пурнăçпа пурăнассине шухăшламан, ĕмĕтленмен те. Ĕлĕк патша влаçĕ чухне Мускав çинчен асăнма та хăранă. Халђ епĕ Мускава кайса курнă çеç те мар, партипе правителствă руководителĕсене хам куçпа курса, вĕсемпе пĕрле ларса, хам чĕлхепе калаçнă. Вĕсем ĕçхалăхне кăмăл тулли йуратса çакнашкал телейлĕ те савăнăçлă, ирĕклĕ пурнăç туса пачĕç, — тет вăл.

Мĕнле çын пулнă ха Модина Йекатеринă? Вăл ĕлĕкхи вăхăтра йалти шкулта 3—4 çул вĕренкеленĕ те, ашшĕ-амăшĕсем ăна, — малала вĕренме хĕн пулать, — тесе пăрахтарнă. 19 çула çитсен качча панă. Кĕтерне мăшăрпа нумай та пурăнман, упăшки вилсе кайнă. Çапла вара ăна, упăшкинчен йулнă пĕр Саљка йатлă ачипе, çав килтех пурлă çуклă пурнăçпа нуша курса пурăнма тивнĕ.

Октябĕр револђуци пулнă хыççăн йала çĕнĕ сывлăш кĕчĕ. Йалсенче вулав çурчĕсем, хĕрлĕ кĕтессем уçăлчĕç. Сахалтарах вĕреннĕ çынсем валђи йатарласа шкулсем, кружоксем йĕркелерĕç. Çав кружоксенче вĕренме Кĕтерне те хутшăннă Кĕнеке, хаçат вуланă. Ĕçхалăхĕн пурнăçĕ ÿсе, сасăлса пынă май, Модина Йекатеринă йал хушшинчи обществăлă ĕçе активлăн хутшăна пуçлана.

1931 çулта Модина йулташ Чÿкçырми йалсоветĕнчен Канаш районĕнчи Советсен сиесне делегат пулса кайнă. Унтан республикри, крайри йулашкинчен Пĕтĕм Сойузри Советсен Сиесне кайма тивĕçлĕ делегат пулнă.

Модина йулташ Мускавра, Кремĕл çуртĕнче ларнă. Сиес уçăличчен вĕсемсĕр музыкă йанранă. Кремљ дворецĕн залĕ тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсемпе тулнă. Тĕрлĕ чĕлхепе калаçаççĕ пулин те, вĕсем пĕр-пĕрине çывăх, туслă, тăванлă.

Партипе правителствă руководителĕсем Сталин, Каганович, Ворошилов, Калинин тата ытти йулташсем ун куçĕ умне курăнсан, пĕтĕм кăмăлĕпе савăннă.

— Пирĕн тăван çĕршывăн мухтавлă та аслă çынĕсем умĕнче ларма тивĕçлĕ пултăм вĕт епĕ тата суйлама килтĕм,—тенĕ вăл хăйпе йунашар ларакан йулташне.

Çак сиесрех ĕнтĕ Модина Йекатеринăна ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕн членне суйланă.

Çакăн пек пуçланса кайнă Модина йулташăн мĕн пур хастарлăхпа ĕçлесси, вĕренесси. Модина йулташ халђ коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Халĕ вăл Тăвай районĕнче сывлăха сыхлав пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Унăн аллинчи болђницăсем, ача-пăча сачĕсемпе йаслисем çулсеренех лайăхланса пыраççĕ. Модина йулташăн ашшĕсĕр, тăлăххăн çитĕннĕ ачи, Саљка вăтам шкулта вĕренет. Килти тăванĕсем колхозра ĕçлесе кăçал нумай тупăш илеççĕ. Вĕсем пуйан та кулђтурăлă пурнăçпа пурăнаççĕ.

Е. Карташов

ССР Союзĕн Аслӑ Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен участкӑсенчи суйлав комиççисене çирĕплетесси çинчен

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар хули совечĕ йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

„ССР Союзĕн Аслӑ Советне суйламали Положенин" 49-мĕшпе 50-мĕш статйисем тӑрӑх, Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар хули совечĕ çакна йышӑнать:

Шупашкар хули тӑрӑх участкӑри суйлав комиççисене обществӑлла организацисен тата ĕççывни обществисен çак представителĕсенчен çирĕплетес:

I. Участкӑри суйлав комиççи—центр Киров йачĕпе тӑракан шкул.

Комиççи председателĕ Никифоров Андрей Никифорович—„Спартак" спорт обществинчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Григорйев Сергей Алексейевич—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи секретарĕ Винокуров Борис Андрийанович—Кĕнеке суту-илӳ работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Лаврентйев Петр Лаврентйевич—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен,

Арбатов Павел Михайлович—Пуçламĕш тата вӑтам шкул работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Сергейева Александра Димитрийевна—Государствӑ суту-илӳ работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Жирнова Дорофейа Ивановна—Шупашкарти „Пекарь" промысла ертелĕнчен.

II. Участкӑри суйлав комиççи—центр Горький йачĕпе тӑракан шкул.

Комиççи председателĕ Чиганайев Александр Василийевич—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Спиридонова Матрена Спиридоновна — Чӑваш йалхуçалӑх институчĕн преподавателĕсен, студенчĕсен тата служӑщчийĕсен коллективĕнчен.

Комиççи секретарĕ Матросов Константин Константинович—Государствӑ учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Буркова Марийа Йаковлевна—Пуçламĕш тата вӑтам шкул работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Димитрийев Андрей Димитрийевич—Полиграфи промышленнӑç рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Крашенинников Николай Константинович—Коммуналлӑ предприйатисен работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Трофимов Парамон Трофимович—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен.

III. Участкӑри суйлав комиççи—центр Хула больници.

Комиççи председателĕ Журавльов Николай Иванович—Государствӑ суту-илӳ работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Строганов Василий Йегорович—Чӑваш йалхуçалӑх институчĕн преподавателĕсен, студенчĕсен тата служӑщчийĕсен коллективĕнчен.

Комиççи секретарĕ Алексейев Терентий Максимович—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи членĕсем:

Клементйева Таисийа Николайевна—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен,

Воронов Александр Иринархович—Шупашкар больницинчи медицинӑ работникĕсемпе служӑщчийĕсен коллективĕнчен,

Савелйев Ананий Григорйевич—Шупашкарти спирт завочĕн рабочийĕсен, инженерсемпе техниксен тата служӑщчийĕсен коллективĕнчен,

Иванова Анастасийа Ивановна—Шупашкар больницинчи медицинӑ работникĕсемпе служӑщчийĕсен коллективĕнчен.

IV. Участкӑри суйлав комиççи—центр Амӑшĕпе ача интересĕсене сыхлав институчĕ.

Комиççи председателĕ Кунаков Михаил Иванович—Аслӑ шкул тата ӑслӑлӑхпа тĕпчев учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Кисельов Сергей Йефимович—Оборонӑна тата авиаципе хими строителствине пулӑшакан обществӑн (Осоавиахим) Шупашкар хулинчи организацинчен.

Комиççи секретарĕ Алексейев Михаил Алексейевич—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен.

Комиççи членĕсем:

Сидорова Зойа Ивановна—Шупашкарти Водопйанов йачĕпе тӑракан тир-сӑран завочĕн рабочийĕсен, инженерсемпе техникĕсен тата служӑщчийĕсен коллективĕнчен,

Шапошников Георгий Василйевич—Полиграфи промышленнӑç рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Игнатйев Никанор Игнатйевич—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен,

Мышкина Лидийа Александровна—Государствӑ учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

V. Участкӑри суйлав комиççи—центр Чӑвашторг кантурĕ.

Комиççи председателĕ Смирнов Алексей Степанович—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Депутатов Иван Василйевич—Аслӑ шкул тата ӑслӑлӑхпа тĕпчев учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи секретарĕ Казаков Илларион Никитич—Административлӑ учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Маркелова Йулийа Владимировна—Оборонӑна тата авиаципе хими строителствине пулӑшакан обществӑн (Осоавиахим) Шупашкар хулинчи организацинчен,

Авдейев Михаил Иванович—Шупашкарти „Кооператор" алӑстӑлӑх промысла ертелĕн членĕсенчен,

Скачкова Пелагейа Мартыновна—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен,

Вйазов Андрей Димитрийевич—Çĕрĕç органĕсен работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

VI. Участкӑри суйлав комиççи—центр Кино-театр.

Комиççи председателĕ Суров Владимир Йаковлевич—Политикласутĕç учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Соколова Марийа Василйевна—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи секретарĕ Светлов Илйа Димитрийевич—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен.

Комиççи членĕсем:

Кириллова Анастасийа Степановна—Оборонӑна тата авиаципе хими строителствине пулӑшакан обществӑн (Осоавиахим) Шупашкар хулинчи организацинчен,

Бодров Михаил Петрович—Шупашкар хулинчи „Кооператор" алӑстӑлӑх промысла ертелĕн членĕсенчен,

Иванов Илларион Захарович—Çĕрĕç органĕсен работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Баринов Андрей Иванович—Вӑрман касакансемпе йухтаракан работниксен професçилĕ союзĕнчен.

VII. Участкӑри суйлав комиççи—центр Кульсойуз çурчĕ.

Комиççи председателĕ Василйев Артем Василйевич—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Табаков Александр Василйевич—Кӑнтӑрти тата центрти машинӑпа трактӑр станци рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи секретарĕ Макльаков Николай Николайевич—Искусствӑ работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Василйева Анастасийа Ананйевна—Пуçламĕш тата вӑтам шкул работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Фомин Георгий Федотович—Пурӑнмали çурт-йĕр коммуналлӑ хуçалӑх работникĕсен тата килти работницӑсен професçилĕ союзĕнчен,

Шаронов Петр Йефимович—Тир-сӑран промышленнӑç рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Голубев Степан Григорйевич—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен.

VIII. Участкӑри суйлав комиççи—центр Поликлиникӑ.

Комиççи председателĕ Мусатов Степан Иванович—Государствӑ учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Петрова Александра Петровна—Кӑнтӑрти тата центӑрти машинпа трактӑр станци рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи секретарĕ Йатмасов Павел Михайлович — Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи членĕсем:

Йеремейева Серафима Федотовна—Амӑшĕпе ача интересĕсене сыхлав институчĕн работникĕсен коллективĕнчен,

Йефимова Вера Григорйевна—Шупашкарти Поликлиникӑри медицинӑ работникĕсен тата служӑщчийĕсен коллективĕнчен,

Йемелйанов Александр Йемелйанович—Пурӑнмали çурт-йĕр коммуналлӑ строителстви рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Маркелов Владимир Мартейевич—Вӑрман касакан тата йывӑç каскалакан промышленнӑç работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

IX. Участкӑри суйлав комиççи—центр Крупскайа йачĕпе тӑракан шкул.

Комиççи председателĕ Вишневский Семен Маркович—Государствӑ учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Матвейева Марийа Давыдовна—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи секретарĕ Макаров Петр Макарович—Кӑнтӑрти тата центӑрти машинпа трактӑр станци рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Черпакова Антонина Василйевна—Пуçламĕш тата вӑтам шкул работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Константинов Василий Константинович — Д.-комиççи фабрикĕн рабочийĕсен, служӑщчийĕсен тата инженерсемпе техниксен коллективĕнчен,

Кузьмин Семен Степанович—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен,

Бронников Сергей Александрович—Шупашкарти авторемонт завочĕн рабочийĕсен, служӑщчийĕсен тата инженерсемпе техникĕсен коллективĕнчен.

X. Участкӑри суйлав комиççи—центр Пичет çурчĕ.

Комиççи председателĕ Зимин Александр Иванович—Вӑрман касакан тата йывӑç каскалакан промышленнӑç работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Бокарев Николай Иванович—Аслӑ шкул тата ӑслӑлӑхпа тĕпчев учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи секретарĕ Митрофанова Александра Александровна—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи членĕсем:

Агейева Марийа Ивановна—Çыхӑну работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Китайева Матрена Михайловна—Шупашкарти Поликлиникӑ медицинӑ работникĕсемпе служӑщчийĕсен коллективĕнчен,

Сидоров Василий Сидорович—Шупашкарти Водосвет рабочийĕсен, служӑщчийĕсен тата инженерсемпе техникĕсен коллективĕнчен,

Стольаров Сергей Константинович—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен.

XI. Участкӑри суйлав комиççи—центр Çĕнĕ шкул.

Комиççи председателĕ Рожайев Петр Иванович—Административлӑ учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Карпейев Василий Иванович—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи секретарĕ Балашов Йермолай Александрович—Судпа прокуратурӑ работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Калиновскайа Йефросинийа Гавриловна—Финансӑпа банк работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Смирнова Тамара Михайловна—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен,

Смирнов Василий Йемелйанович—Вӑрман касакан тата йывӑç каскалакан промышленнӑç рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Инайев Михаил Никифорович—пурӑнмали çурт-йĕр коммуналлӑ строителстви рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен.

XII. Участкӑри суйлав комиççи—центр Строителсен клубĕ.

Комиççи председателĕ Мартынов Григорий Алексейевич—Аслӑ шкул тата ӑслӑлӑхпа тĕпчев учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Николайев Степан Николайевич—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи секретарĕ Сапаркин Спиридон Григорйевич—Кӑнтӑрти тата центрти машинпа трактӑр станци работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Истоцкий Димитрий Прокопйевич—Оборонӑна тата авиаципе хими строителствине пулӑшакан обществӑн (Осоавиахим) Шупашкар хулинчи организацинчен,

Козлова Вера Ивановна—Пуçламĕш тата вӑтам шкул работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Йегорова Таисийа Йегоровна—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен,

Грачева Льудмила Трофимовна—Амӑшĕпе ача интересĕсене сыхлав институчĕн рабочийĕсемпе служӑщчийĕсен коллективĕнчен.

XIII. Участкӑри суйлав комиççи—центр Кооператив техникум çурчĕ.

Комиççи председателĕ Кольцов Иван Иванович—Государствӑ учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Федоров Василий Федорович—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи секретарĕ Иванов Филипп Иванович—Аслӑ шкул тата ӑслӑлӑхпа тĕпчев учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Семидедов Иван Семенович—Пурӑнмали çуртйĕр коммуналлӑ строителстви работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Кудрйашова Парасковйа Трофимовна—Коммуналлӑ предприйатисен работникĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Артемйева Анна Артемйевна—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен,

Кузьмин Назарий Кузьмич—Судпа прокуратура работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

XIV. Участкӑри суйлав комиççи—центр Калинин йачĕпе тӑракан шкул.

Комиççи председателĕ Жуков Николай Василйевич—Политикласутĕç учреждени работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Семенов Иван Семенович—Пушӑрпа кĕрешекен работниксен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи секретарĕ Жигалова Анна Димитрийевна—Центрти потребителĕ кооперацин работникĕсен професçилĕ союзĕнчен.

Комиççи членĕсем:

Чурилов Павел Петрович—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен,

Коньайева Йелена Николайевна—„Личный труд" алӑстӑлӑх промысла ертел членĕсенчен,

Михайлов Иван Михайлович—Тир-сӑран промышленнӑç рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Шутурлова Татйана Сергейевна—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен.

XV. Участкӑри суйлав комиççи—центр Садвинтрест 16-мĕш №-лĕ совхозĕн кантурĕ.

Комиççи председателĕ Назаров Иван Йефимович—Садвинтрест совхозĕн рабочийĕсемпе служӑщчийĕсен коллективĕнчен.

Комиççи председателĕн заместителĕ Маркин Владимир Петрович—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Комиççи секретарĕ Калиновский Анисим Андрейевич—Оборонӑна тата авиаципе хими строителствине пулӑшакан обществӑн (Осоавиахим) Шупашкар хулинчи организацинчен.

Комиççи членĕсем:

Козин Василий Романович—Коммуналлӑ Автогужтранспорт рабочийĕсемпе служӑщчийĕсен коллективĕнчен,

Чулмакова Анна Андрейевна—Ерех тӑвакан совхозсен рабочийĕсен професçилĕ союзĕнчен,

Леонтйев Василий Леонтйевич—Пĕтĕм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунисла Союзĕн Шупашкар хулинчи организацинчен,

Йевтрокин Димитрий Иванович—Пурӑнмали çуртйĕр хуçалӑхĕн работникĕсен тата килти работницӑсен професçилĕ союзĕнчен.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕн председателĕн ĕçĕсене тӑваканĕ
КАПЛИН.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕн
секретарĕ БАРАБАНОВ.

Шупашкар хули,
1937 çулти нойабĕрĕн 1-мĕшĕ.

Испанири социалисла тата коммунисла партисем коммунисла тата иккĕмĕш интернационалсене çыру йанӑ

ВАЛЕНСИ, октйабĕрĕн 30 мĕш (ТАСС). Испанири коммунисла тата социалисла партисем Коммунисла Интернационала тата иккĕмĕш Интернационала астури халӑхĕн йывӑр пурнӑçĕ çинчен калакан çыру йанӑ. Хихова илнипе, тенĕ çырура, фашиссем Испани çине тата хытӑ тапӑнаççĕ. Йутçĕршыв çарĕсен хисепĕ ытларахнипе, вӑйлӑ хĕçпӑшалланнипе çеç фашиссем астури бойецĕсен паттӑрла хирĕçӳне çапса хуçма пултарчĕç. Никам хӳтĕлемен пиншер хĕрарӑмсем, ватӑсем тата ачасем пултарулӑ астурийцӑсене асаплантаракан йунлӑ фашисӑм влаçĕ аллинче тӑраççĕ. Коммунисла Интернационал тата иккĕмĕш Интернационал Астурири фашисла террора чарса лартассине, халӑха куçарса килессипе, пиншер хаклӑ пурнӑçа çӑлассипе пысӑк пулӑшу пама пултараççĕ.

„Епĕр,—тенĕ çырура,—Испанийе республиканцӑсем илессĕ, тесе шантаратпӑр. Фашисӑма хирĕçле вӑйсен куллен кунах çирĕпленсе пыракан пĕрлĕхĕ, республикӑ çарĕн çапӑçу хавачĕ ӳссе пыни тата çĕршывӑн пĕтĕм ресурсĕсене вĕçне çитиччен усӑ курни—епĕр фашисӑма çĕнтерме пултарассин тата çĕнтерессин чи пысӑк шанчӑкĕсем пулса тӑраççĕ. Пирĕн тӑтӑклӑ çĕнтерӳ, пире пĕтĕм тĕнчери пролетариат пулӑшсан тата хӑвӑртрах пулать. Испанцӑсен пĕрлĕхлĕ вӑйĕ тата пĕтĕм тĕнчери пролетарисен пĕрлĕхлĕ пулӑшувĕ фашисӑма кайала чактарĕç".

Испанири коммунисла тата социалисла партисем, тӑтӑклӑ сĕнӳсем çине куçса, коммунисла Интернационалран тата иккĕмĕш Интернационалран, республикӑлла Испанийе пулӑшма уйрӑм çĕршывсенче тата пĕтĕм тĕнчере талкӑшпех васкавлӑ мерӑсем йышӑнма икĕ Интернационал представителĕсен канашлуне пухма ыйтнӑ. Кунпа пĕрле çаксене тума кирлĕ: Астурире тискеррĕн асаплантарассине пĕтерсе лартмала, халӑха куçарса килмеле, Испани республикин правителстви вальли суту-илӳ тума ирĕк памала, чикĕ уçмала. Фашисла çĕршывсенчен чукунçулсемпе йе тинĕс çулĕпе пыракан таварсене бойкот организацилемеле. Йулашкинчен тата, хальхи вӑхӑтра Испани çĕрĕ çинче тӑракан пĕтĕм йутçĕршыв чаçĕсене, çавнашкалах тата мароканцӑсемпе легионерсен отрйачĕсене кайала илсе тухмала тумала.

Çырува Испанири коммуниссен партин генеральнӑй секретарĕ Хосе Диас тата социалисла парти секретарĕ Ламонеда алӑ пусна.

ССР Союзĕпе Германийе тӑхӑр державӑ конференцине чĕннĕ

Францин Гавас телеграф агенстви пĕлтернĕ тӑрӑх, тӑхӑр державӑ договӑрĕ çине алӑ пуснӑ правителствӑсен йачĕпе Бельги правителстви тӑхӑр державӑ конференцине ССР Союзĕпе Германи правителствисене чĕннĕ.

(ТАСС).

* * *

1922 çулта, Китай çĕршывне хӑй ирĕккĕн тытса тӑракан государствӑ тӑвас ыйту тӑрӑх килĕшсе тӑхӑр державӑ договӑр тунӑ. Договӑр çине: Америкӑри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, Бельги, Англи, Китай, Франци, Итали, Йапони, Голланди, Португали государствисем ал пуснӑ. Çав государствӑсен конференцине нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче Бельги столицинче—Брюсселре уçма палӑртнӑ.

Конференцин Инçет-Хĕвелтухӑçри лару-тӑрува сӳтсе йавмала.

Йапони Брюсселри конференцие ыма чĕннине йышӑнман.

Пĕрремĕш совет електрохочĕ

ЗЕЛЕНЫЙ ДОЛ (Тутар республикĕ), октйабĕрĕн 28-мĕш (ТАСС). М. Горький йачĕпе тӑракан пароходсем тӑвакан заводӑн затонĕнчен завод тунӑ пĕрремĕш совет електрохочĕ испытанилĕ рейса ишсе тухнӑ.

Хайĕн конструкципе електроход ахаль пароходсенчен пысӑккӑн уйӑрӑлса тӑрать. Електроходӑн пĕтĕм механисӑмĕсене— хӳре тытмалине, насоссене, йакӑрсем антарса хӑпартмалине тата ыттине те — пĕтĕмпех електричествӑпа ĕçлемеле тунӑ.

Електроходӑн ишмели урапасем пур йенеле те çавӑрӑнма пултараççĕ. Ку електрохода вырӑнтан тапранмасӑрах пур йенеле те çавӑрӑнма май парать.

Електроход, халӑха нумай лартмасан, Атӑлпа Камӑ пароходĕсем пырса кĕреймен пĕчĕк йуханшывсем çинче те çӳреме пултарать. Електроход çине 210 пассажир тата 400 тонна груз вырнаçать. Електроход испытанийĕ унӑн механисӑмĕсем тĕрĕс ĕçленине тата вӑл лайӑх пахалӑхлине кӑтартнӑ.

Пысӑк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ

ЙЕПРЕÇ. Пур промысла ертелсенчи алӑстаçсем, заводсенчи рабочисем Аслӑ Октйабĕр уйавне пысӑк ӳсĕмсемпе кĕтсе илесшĕн пысӑк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. „Коопмлеспром" ертелĕнчи алӑстаçсем çулталӑкри плана суйлав кунĕ тĕлне тултарма пулчĕç. Çакна вĕсем ӑнӑçлӑн пурнӑçа кĕртсе пыраççĕ. Кунта стахановецсен йышĕ кулленех ӳссе пырать. Хальхи вӑхӑтра 26 çын стахановла ĕçлесе лайӑх тĕслĕхсем кӑтартаççĕ. Акӑ стружкӑ кӑларакан цейри А. Йефремова уйӑхра 8788 килограм стружкӑ туса кӑларас вырӑнне 13234 килограм кӑларнӑ. Çавӑн пекех Васийлева, Федорова стахановкӑсем нормӑна 156 процентран кайа мар тултарса пыраççĕ. Хӑма çуракан цехри В. Холодилин 557 кубла метр хӑма çурас вырӑнне 693 кубла метр çурса нормӑна 124 процент тултарнӑ.

Кирпĕч тӑвакан ертелти рабочисем Октйабĕр уйавне завода йусаса пĕтернипе кĕтсе илеççĕ. Халĕ хĕллехи вӑхӑтра та кирпĕч тума май пур. Кунти рабочисем: Башкиров, Учайев, Самойлов йулташсем нормӑсене 160 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Ку таранччен ударник пулнӑ Йемельйанов, Федйакина, Николайев нормӑна 150 процент тултарса ĕçлеме тытӑнса стахановецсен ретне тӑчĕç. Митеньков мастер висĕ çынна вĕрентсе кӑларчĕ. Вӑл хӑй 55 çулта пулсан та, стахановла ĕçлет. Уйӑхне 500 тенкĕ ĕçлесе илет.

Хӑма çуракан заводри рабочисем халӑх тӑшманĕсен йулашкийĕсене хӑвӑртрах пĕтереççĕ. Халĕ заводра простойсем пулмаççĕ, хӑма çуракан рамӑ çинче ĕçлекен Захаров бригади 35 кубла метр çурас вырӑнне 45 кубла метр çурать. Кунта Октйабĕр уйавĕ тĕлне електричествӑ çути пулать.

И. Алексейев.

Пур çĕрте те сисĕмлĕ пулмала

(Пограничник çырӑвĕ)

Епĕр йулташпа, хулари Культурӑпа кану паркĕнчен тухрӑмӑр та, çар городокĕ патнелле утса пыратпӑр. Городок патнерех çитерехпе пĕр мĕлке шунине куртӑмӑр.

— Сĕм çĕрле мĕн туса çӳрет ку çын?—ыйту патӑм епĕ йулташа.

— Ку, тем тусан та, шанчӑклӑ çын мар. Усал шухӑшлӑ çын пулмала,—терĕ йулташ.

Хайхи çын пире курчĕ пулас, васкаса утма пуçларĕ.

— Стой! Стрелять будем!—кӑшкӑрса йатӑмӑр иккĕн тан. Çын чарӑнчĕ. Епĕр ун патне пырса документ ыйтма пуçларӑмӑр. Вӑл пире ниепле ответ параймасӑр, чĕлхесĕр çын пек йынӑшкаласа илчĕ. Вара епĕр ӑна хамӑрпа пĕрле утма хушрӑмӑр.

„Ухмах" çын машин килнине курчĕ те, тӳрех ӑна хирĕç утма пуçларĕ, аран-аран айкинелле пӑрса илме ĕлкĕртĕмĕр ӑна. Çапла аппаланса заставӑна çитрĕмĕр.

Тепĕр кунне заставӑ начальникĕ епĕр тытнӑ „ухмах" çын йутçĕршыв шпионĕ пулни çинчен пĕлтерсе пире, йулташпа иксĕмĕре те благодарнӑç пачĕ.

В. Уруков.

Положени кĕнеки кирлĕ

Тракра район пуçланнӑрантпах кĕнеке магазинĕ пур. Магазин ĕçне вӑйлатас вырӑнне кооператив правлени председателĕ Порфирйев йапӑхлантарса пыма тӑрӑшать. Магазинта ĕçлекенсене йаланах улӑштарать.

Колхозниксем ыйтнӑ кĕнекесене илсе килсе сутассишĕн тӑрӑшмасть. Халĕ „ССР Союзĕн Аслӑ Советне суйламали Положени" кĕнеки тата суйлав çинчен калакан кĕнекесем кирлĕ. Вĕсене Тракра тупса илме çук.

М. Иванов.

ХРОНИКӐ

Чӑваш АСС Республикĕн Ĕçтӑвакан Тĕп Комитечĕпе Халӑх Комиссарĕсен Совечĕ Николай Василйевич Жуков йулташа Чӑваш АСС Республикĕн Ĕçтӑвакан Тĕп Комитечĕпе Халӑх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ пулма çирĕплетнĕ.

Ответлӑ редактӑр
П. И. ИВАНОВ.

„Чӑваш Коммунĕ" çырӑнса илмелли хаксем; 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 50 пус, 1 уйӑха —2 т. 50 пус. Алçырӑвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 815. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 1928. Тираж 11156. ф. 58—92 см. 1—1 п. л.